Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш ҫул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 НОЙАБĔР 22 ТУНТИКУН 267 (4779)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе контур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Декаберĕн 12-мĕш—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Социалисăмла выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малала хăпартассишĕн!

Пирĕн социалисăмла йалхуçалăхĕ пит пысăк çитĕнÿсем тунипе пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Çав çитĕнÿсене курса—пирĕн туссем хĕпĕртеççĕ, пирĕн тăшмансем тĕлĕнсе тăрахаççĕ. Халĕ пирĕн йалхуçалăхĕнче тăвăллăн хăпарса çыманни пĕр отрăçĕл те çук. ССР Сойузĕнче çĕр ĕçĕ вăрçăчченхи вăхăтринчен икĕ хут нумайрах продукци парать.

Кăçалхи çул колхозсен тата совхозсен уйхирĕсенчен 6 миллиард та 800 миллион пăт тырă пуçтарса кĕртнĕ,—патша Российĕ нихăçан та, тырпул чи лайăх пулнă çулсенче те, кун чухлĕ тырă туса курман. Çĕрмамăк продукцийĕ тĕлĕшпе ССР Сойузĕ Иевропăри çĕршывсем хушшинче пĕрремĕш вырăнта, пĕтĕм тĕнчере виççĕмĕш вырăнта тăрать. Сахăр кăшманĕ тата йĕтĕн продукцийĕ тĕлĕшпе ССР Сойузĕ пур капиталисăмла çĕршывсенчен те малта пырать, тĕнчере пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать.

Пирĕн хуçалăхăн çав тери паха отрăçĕлĕ—выљăх-чĕрлĕх ĕрчетесси те, темиçе çул кайала çеç пысăк йăвăрлăхра пулнăскер, халĕ тăвăллăн хăпарса пырать.

Кăçалхи çул пуçланнă тĕле мĕн пур колхозсенчен 95,7 процентĕн выљăх-чĕрлĕх ĕрчетекен таварлă фермăсем пулнă. Пилĕк çул кайала колхозсен таварлă фермисенче майракалă шултра выљăхсем 5.400 пин пуç, сыснасем 2.100 пин пуç, сурăхсемпе качакасем 1.600 пин пуç пулнăччĕ. Кăçалхи çулăн пуçламĕшĕ тĕлне ĕнтĕ колхозсен фермисенче майракалă шултра выљăхсем вунике миллион пуç, сыснасем пилĕк миллион та виçĕ çĕр пин пуç, сурăхсемпе качакасем 18.700 пин пуç пулнă. Улăпла ÿсĕм! Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетессине хăпартас ĕçре халиччен курман пысăк хăвăртлăхсем пулнă!

Пĕрлештернĕ выљăх-чĕрлĕхсен хисепĕ ÿснипе пĕр вăхăтрах, колхозниксен хăйсен килĕсенчи выљăх-чĕрлĕхсен хисепĕ те улăпла ÿснĕ. Тăватă çул хушшинче (1933—1936 ç. ç.) колхозсен таварлă фермисем тата контрактаци тăрăх, льготăлă хакпа тата кредит парса, колхозниксене пилĕк миллион пуçа йахăнах ĕнесемпе пăрусем, вуннпĕр миллион пуçа йахăнах сыснасемпе сысна çурисем тата виçĕ миллион та 237 пин пуç сурăхсемпе путексем сутнă!

Пирĕн совхозсенче те выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес отрăçĕл тăвăллăн хăпарса пырать. 1936 çулхи ийулĕн пĕрремĕшĕ тĕлне пулнă сведенисем тăрăх, совхозсен майракалă шултра выљăхсем пилĕк миллион пуç ытла, сыснасем пилĕк миллион пуçа йахăн тата сурăхсемпе качакасем вуннпĕр миллион пуçа йахăн пулнă. Иулашки çулсем хушшинче совхозсенче выљăх-чĕрлĕх ĕрчетнин таварлă продукцийĕ нумай хут ÿснĕ.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çак пит пысăк ăнăçусем—хамăрăн пĕтĕм йалхуçалăхне тата уйрăмăн илсен, унăн выљăх-чĕрлĕх ĕрчетекен отрăçĕлне социалисăмла реконструкцилени результачĕ пулса тăраççĕ. Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнÿсене клас тăшманĕсене хирĕç — троцкисла-бухаринла сăтăрçăсемпе шпионсене хирĕç—совет халăхĕн тăшманĕсене хирĕç хайаррăн кĕрешсе тунă. Тăшмансем, выљăхсене йерекен чирсем сарса, хаклă ăратлă тата çамрăк выљăх-чĕрлĕхсене пĕтерсе, тата ытти ирсĕр, сăтăрлă майсемпе те, социалисăмла выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сийен кÿме хăтланнă. Тăшмансен ĕçĕ тухмарĕ! Пирĕн хуçалăхăн çак участкинче те тăшмана çĕмĕрсе тăкнă. Миллионшар колхозниксемпе совхозсенчи рабочисем, Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ тавра пĕтĕçсе, усал тăшмансен сăтăрлăхне тăрă шыв çине кăларчĕç, малашне те тăрă шыв çине кăларса пыраççĕ. Социалисăмла выљăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çĕнтерÿлĕн малала кайса пырать.

Пайан епĕр („Чăваш Коммунĕн“ 266-мĕш номĕрне пăх—ред.) ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулхи нойаберĕн 1-мĕшне выљăх-чĕрлĕх хисепĕ мĕн чухлĕ пулнине Пĕтĕм Сойузĕпе çырса тухасси çинчен“ йышăнăвне пичетлесе кăларатпăр. Пирĕн çĕршывра выљăх-чĕрлĕх перепиçне кашни çулах ирттереççĕ. Ку вăл выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пит кирлĕ. Перепиç материалĕсем государствă планне мĕнле тултарса пынине тĕрĕс пĕлме, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç вальли малашнехи плансене тунă чухне мĕнрен тапранса каймалине пĕлме май параççĕ.

1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕпе 8-мĕшĕ хушшинче ирттерекен перепиç уйрăмах паха пулать. Çак перепиç иккĕмĕш пйатилеткă планне тултарнин итогне туса, виççĕмĕш пйатилеткăра выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели план тума тĕп материалсем памала.

Çакăнтан ĕнтĕ, советсен тата партин вырăнти оргăнĕсен — чи малтан çĕр оргăнĕсен—пулас перепиçе ирттерес тĕлĕшпе пит тимлĕ пулмалли курăнсах тăрать. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, ССР Сойузĕн Совхозсен Халăх Комиссариатне, ССР Сойузĕн Апатçимĕç промышленнăç Халăх Комиссариатне, выљăх-чĕрлĕх хуçалăхĕ тытакан ытти ведомствăсемпе организацисене те, государствă тата кооперации хуçалăхĕсен директăрĕсене, çавăн пекех колхоз председателĕсене перепиç пуçланнă тĕле выљăх-чĕрлĕхсене инвентаризаци тума хушрĕ. Инвентаризацине уйрăмах тĕплĕн туса ирттерес пулать. Перепиç ирттерме пыракан регистраторсене, государствă тата кооперации хуçалăхĕсен директăрĕсен, колхоз председателĕсен те выљăх-чĕрлĕх хисепĕ çинчен тĕрĕс, хăйсем тĕрĕслесе тухнă сведенисене парас пулать.

Перепиç ирттерме хатĕрленессине пайанхи кунран пуçласах пур çĕрте те анлăн сарса йарас пулать. Халăх-Хуçалăх учочĕн Тĕп Управленин оргăнĕсен, Советсен ĕçтăвакан комитечĕсен тата парти организацисен чи пирвай тумалли ĕçĕ—пулас счетчиксен çĕр пинлĕ çарне суйласа тупасси пулать. Çав счетчиксене кашнине уйрăмăн райĕçтăвком йе хула совечĕ çирĕплетмеле. Интеллигенци кадрĕсем халь ĕнтĕ йалта çителĕклех пысăк. Кашни районра вăтăр-хĕрĕх счетчик тупасси ытла пит йăвăр ĕçех мар. Çак ĕçе тума политикă тата ĕç пултарулăхĕ тĕлĕшпе тĕрĕсленнĕ, вĕсене хушнă ĕçшĕн ответлăха тата вĕсем çине пысăк шанчăк хунине туллин ăнланакан çынсене уйăрма тăрăшас пулать.

Перепиç ирттерни кирли çинчен тата перепиç задачисем çинчен халăха анлăн ăнлантарса памала. Колхозсемпе совхозсенче активисен групписене организацилемеле, вĕсем перепиçе кăтартулă ирттерме пулăшĕç.

Пĕтĕм çĕршыв халĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленмели ырă кунсенче пурăнать. Суйлава хатĕрленни хулара та, йалта та халăх массисен производствăлă активлăхĕн улăпла пысăк хумне çĕклерĕ. Колхозниксем халĕ социалисăмла йалхуçалăхне тата çÿлерех çĕклесси çинчен, социалисăмăн çĕнтерÿвĕсене тата ытларах ÿсентересси çинчен шухăшлаççĕ. Çавна тума пулăшакан кирек мĕнле ĕçе те миллионшар колхозниксемпе колхозницăсем пурте пĕр хавасланса кĕтсе илеççĕ. Вырăнсенчи руководителĕсен задачи—пулас перепиçе чи лайăх ирттермеле тăвасси пулать.

(„Правда“ умстатйи).

„Н-209“ самољота шырама

Чухновски йулташ отрйачĕ Рудољф утравĕ çинче

Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, нойаберĕн 19-мĕшĕнче 23 сехетре Рудољф утравĕ çине Совет Сойузĕн Геройĕ Бабушкин йулташăн „Н-211“, љотчик Мошковский йулташăн „Н-212“ тата љотчик Фарих йулташăн „Н-213“ карапĕсем вĕççе пынă. Отрйад командирĕ Чухновски йулташ „Н-210“ самољотпа Рудољф утравĕнчи аеродром çине 14 сехет те 27 минутра анса ларнă. Рудољф утравĕ çине ĕнтĕ Чухновски йулташăн пĕтĕм отрйачĕ пухăннă. „Н-209“ самољота шырама вĕçсе хатĕрленме тытăннă.

* * *

Америкăн паллă полљар тĕпчевçи Вилкинс, йатарласа тунă самољотпа Леваневски йулташ екипажне шырама тухнăскер, халĕ те Едмонтонрах ларать-ха. Вăл температурă чакассине тата йур хулăмланассине кĕтет.

(ТАСС).

Сменăра вунă нормă ытла тултарнă

ГОРЬКИ. „Красное Сормово“ заводăн 4-мĕш №-лĕ цехĕнчи стахановецсем—Воргин тата Зайцев йулташсем пысăк рекорд тунă. Вĕсем нойаберĕн 18-мĕшĕнче производствăлă заданине 1.070 процент тултарнă. Нормă тăрăх 150 сехет хушшинче тумалли ĕçе, стахановецсем çиччĕ сехет хушшинче тунă.

(ТАСС).

Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Лука Семйонович Спасов

Улатăр суйлав округĕ № 366

Л. С. Спасов Пĕтĕм Сойузлă коммунистсен (большевиксен) парти членне 1918 çулхи декаберĕн 25-мĕшĕнче кĕнĕ.

1937 çулăн çурринчен пуçласа Чăваш АСС Республикин Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕнче ĕçлет.

Вăл Чăваш АСС Республикинчи Трак районĕнчи Трак-йалĕнче, 1899 çулхи февралĕн 7-че, хресчен çемйинче çуралнă. Национальнăçĕ—чăваш.

Ашшĕ-амăшĕсем йалта çĕрĕçĕпе пурнаççĕ. 1923 çулта машинăсем илме пĕрлешнĕ йулташлăха кĕнĕ, 1930 çултанпа колхозра ĕçлеççĕ. Революциччен питĕ чухăн пурăннă, сакăр çынлă çемйе пуçне пĕртен пĕр йат çĕрĕ кăна пулнă.

14 çула çитсен Лука Семйонович тара кĕрĕшсе ĕçлеме пуçланă. Çулталăк хушши вулăсри правленире писсăра вĕренсе ĕçленĕ. Унта малтанхи 5 уйăх хушши пĕр тÿлевсĕрех ĕçленĕ, çакăн хыççăн Иетĕрнере, Иетĕрне уйесĕнчи казначействăра çулталăк çурă ĕçленĕ, вара 1917 çулхи февральтe кивĕ çара кайнă.

Кивĕ çарта 4 уйăх хушши салтак пулса политикăлă пурнăçа активлăн хутшăнма тытăннă. Çавăнтах ăна Полк советне суйлаççĕ. Ытти салтаксемпе пĕрле Хусанти Адмиралтействă слободинче полицийе хĕçпăшалсăрлатас ĕçе хутшăннă. Совет влаçĕн оргăнĕсене çирĕплетес, фронт вальли тырпул, лаша-сем ытти продуктăсем мобилизацилес [illegible] лă налог хурас ĕçре активлăн ĕçленĕ.

1919 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа 1926 çул пĕтиччен, сакăр çул хушши, Хĕрлĕ Çарта пулнă. Ахаль красноармейцăран батальйон, полк, бригадă штабĕн комиссарне çити ÿснĕ.

2-мĕш Приволжский полкра—1 уйăх, губернăри утлă çар запасĕнче—9 уйăх, 49-мĕш етаплă батальйонра — çултталăк, 2-мĕш чукунçул полкинче—3 уйăх, 1-мĕш уйрăм чукунçул бригадинче — 5 уйăх, чукунçулсен тĕп паркĕнче—çултталăк та икĕ уйăх, инженерла тĕп çар складĕнче — 2 çул хушши ĕçленĕ.

Спасов йулташ 1920 çулта Хĕвеланăç фронтĕнче Ново-Борисово, Гайн, Минск, Барановичи, Волковыйск патĕнче шурă полљаксемпе кĕрешнĕ çĕрте аманнă.

Вĕренессе Спасов йулташ вăтам шкула та вĕренсе пĕтереймен.

Нумай вăхăт хушши, 7 çула йахăн, партилĕ тата политикăлă ĕçре пулнă: 1918 çулхи декаберĕн пуçласа 1919 çулхи май уйăхне çитиччен, Хĕрлĕ çара кайиччен, Упи вулăсĕнчи парти комитечĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ; Хĕрлĕ çарта 14-мĕш чукунçул полкинче, унтан 2-мĕш чукунçул полкинче çар комиссарĕ тата политсекретариат начальникĕ пулнă, 5 çул хушши çар организацийĕсенче комиссарта ĕçленĕ.

Хĕрлĕ çартан килсен, çултталăк çурă хушши (1927—28 çулсенче) партин Шупашкар хули комитечĕн тата Шупашкар районĕнчи комитетăн секретарĕ пулса ĕçленĕ.

11 çул хушши ытла Спасов йулташ совет ĕçĕнче ĕçлет. Çултталăк ытла (1918 — 19 çулсенче) Упи вулĕçтăвкомĕнче ĕçленĕ. Виçĕ çула йахăн Чăваш АСС Республикин Çĕрĕç халăх комиссарĕ пулса ĕçленĕ, унтан пĕр çул хушши (1931—32 çулсенче) Чăваш АСС Республикин Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕнче ĕçленĕ.

Иулашки ултă çул хушши Спасов йулташ Горькире, Крайĕçтăвком председателĕн заместителĕ пулса ĕçлет.

Спасов йулташ нумай вăхăт хушши Горькире ĕçленĕ пулсан та, чăваш халăхĕнчен уйăрăлман, чăваш рабочийĕсемпе колхозникĕсен пурнăçĕпе интересленсе пурăннă. Вăл республикăна час-часах килсе тăнă, партин облăçри конференцисенче тата Чăваш АСС Республикинчи советсен сйесĕсенче активлăн хутшăннă.

Спасов йулташ Ленин—Сталин партинче 19 çул хушши тăрса хăйĕн пурнăçне тăван çĕршывăмăра, совет халăхĕшĕн ĕçленĕ çĕре панă. Вăл нимĕнле оппозицире те, партийе хирĕç нимĕнле ушкăнсенче те нихăçан та пулман. Спасов йулташăн пĕтĕм ĕçĕ вăл пирĕн тăван çĕршывăмăрăн шанчăклă ывăлĕ пулнине, партин тата халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешÿре тĕрĕсленнĕ, партин тĕп çулйĕрĕшĕн, ĕççыннисен интересĕсемшĕн, аслă Сталин кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме пĕлекен çирĕп большевик пулнине кăтартса парать.

Спасов йулташ ĕçленĕ нумай вырăнсенче ăна советсен тата партин йертсе пыракан оргăнĕсене суйласа лартнă. 1922 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа 1923 çулхи феврал уйăхĕччен Витебск хули совечĕн членĕ пулнă. Витебскрах район совечĕн членĕ те пулнă.

1923—1924 çулсенче Новый Торжок уйесĕнчи ĕçтăвком членĕн кандидачĕ пулнă. Ярославльре ĕçленĕ чухне икĕ составра хула совечĕн членĕ тата икĕ составра партин комитечĕн членĕ пулнă.

Хĕрлĕ çартан килсен, 1928 çулхи нойаберĕн 28-мĕшĕнче ăна партин Шупашкар хули комитечĕн составне суйлаççĕ, вара Горькине куçиччен (1932 çулччен) партин пур конференцисенче те хула комитечĕн составне суйлаççĕ. Çав вăхăтрах Спасов йулташ хула совечĕн тата Шупашкар райĕçтăвкомĕн членĕ те пулнă.

Вунă çул хушши тăтăшах, 1927 çулхи мартран пуçласа ку тарана çитийех, ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн тата Чăваш АСС Республикин Тĕпĕçтăвкомĕн членĕнче тăрать.

1930 çулхи ийуль уйăхĕнчен пуçласа ку тарана çитийех партин Горький крайкомĕн членĕ, 1931 çулхи феврал уйăхĕнчен вара—Крайĕçтăвком членĕ. 1932 çул çурринчен пуçласа йаланах парти Крайком бÿровĕн составĕнче тăрать.

Спасов йулташа Витебскра, Смоленскра, Гомельре, Йарославльре Чăваш АСС Республикинче, Горькире губернари тата облăçри нумай партконференцисемпе Советсен сйесĕсене делегата суйласа йанă. Вăл советсен пĕтĕм Российăри XIV, XV, XVI, XVII сйесĕсенче, ССР Сойузĕнчи Советсен V, VI, VII тата Чрезвычайлă VIII сйесĕсенче делегат пулнă.

1929 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа ку тарана çитийех—ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕн членĕ.

Партин Тĕп Комитечĕ Спасов йулташа Чăваш республикине ĕçлеме йарсан, Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн йулашки сессийĕ октаберĕн 17-мĕшĕнче Чăваш АСС Республикин Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателне суйласа лартрĕ.

Сойуз Советне суйламалли Улатăр суйлав округĕнчи ĕççыннисем пирĕн орденлă республикăран Аслă Совет депутатне суйлама кандидата Лука Семйонович Спасов йулташа палăртрĕç.

Совет Сойузĕн Геройĕ А. В. Бельаков хăйĕн суйлавçисем патĕнче

САРАТОВ, нойаберĕн 19-мĕш (ТАСС). Комбайнсем тăвакан заводăн уйав чухнехи пек илемлетнĕ клубĕнче Саратов суйлав округĕнчен тăратнă Сойуз Советне депутата суйламалли кандидат Совет Сойузĕн Геройĕ Александр Васильевич Бельаков суйлавçăсемпе тĕл пулнă. Пухăва хулари предприйатисенчи рабочисем, инженерсем тата служащисем пулнă. Вĕсем сĕтел хушшинче президиума Сталин йулташа ÿстерни паттăр, пирĕн çĕршывăн тулли кăмăллă соколĕ курăнсан алă çупса саламланă.

Пухура комбайнсем тăвакан заводăн йатлă стахановецĕ Копов йулташ сăмах тухса калать.

— Çак кунсенче,—тет вăл,—пĕтĕм совет халăхĕ çав тери пысăккăн савăнать. Вăл большевиксен аслă партине, унăн çулпуçне, халăха çук чаплă Конституци панă Сталин йулташа йуратнине тата уншăн вăйа хурса ĕçленине кăтартать. Декаберĕн 12-мĕшĕнче епĕр пурте пĕр çын пек, сасăсене хамăр кандидатăн—Бельаков йулташăн парăтпăр.

— Епĕ пысăк хисепе,—тенĕ хăйĕн пухура тухса каланă сăмахĕнче А. В. Бельаков йулташ,—Сойуз Совечĕн депутатне суйламалли кандидат пулма тивĕçлĕ пултăм. Епĕ сирĕнпе 1919 çултанпах тăванла. Именнă кунта, Атăл лешйен çеçенхирĕсенче, манăн алăра хĕçпăшал тытса Чапайĕвăн чаплă дивизин ретĕнче хамарăн хавăслă та телейлĕ пурнăçшăн тăракан правăсене сыхламала пулнă.

Мана Сталинла пйатилеткă çуратнă—комбайнсем тăвакан завод пур çĕрте, Сталин йачĕпе тăракан индустрилĕ районра баллотировкăра тăма килĕшÿ пама савăнăçла пулчĕ.

Епĕ шантаратăп сире, пирĕн тăван çĕршывăн малалахи çитĕнÿсемшĕн, аслă коммунисла партин тĕп шухăшĕшĕн пирĕн çĕршывра пуйан, культурăлă, телейлĕ пурнăçшăн пĕр ывăнмасăр кĕрешетĕп.

Бельаков йулташ суйлавçăсем ыйтнипе хăй Сталин йулташпа тĕл пулни çинчен, хăйĕн усă, тулли культурулă тата геройла пурнăçĕн уйрăм епизочĕсем çинчен каласа панă.

Сергей Ксенофонтович Коротков — ЧАССР Тĕпĕçтăвком председателĕн заместителĕ. Ăна Национальнăçсен Советне депутата суйлама Йĕпреçри № 501 суйлав округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Национальнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Сергей Ксенофонтович Коротков

Йĕпреç суйлав округĕ № 501

Национальнăçсен Советне суйламалли Йĕпреç суйлав округĕнче Йĕпреçри „Спортара“ заводри рабочисемпе служащисем, Йĕпреç районĕнчи „Çиçĕм“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Национальнăçсен Совечĕн депутачĕ пулма пысăк тырпул маçтăрне, 1936 çулхи декабĕр уйăхĕнчен пуçласа ПСК(б)П членĕ пулса тăракан Сергей Ксенофонтович Коротков йулташ кандидатурине палăртрĕç.

Сергей Ксенофонтович Коротков Кольцовкăра (Вăрнар р-че, Чăваш республикинче) 1908 çулта çуралнă.

Унăн ашшĕ-амăшĕ чухăн хресченсем пулнă. Çемйери 12 çын вальли пĕр йат çĕрĕ кăна пулнă.

Сергей Ксенофонтовичăн ашшĕ 1914 çулта вилнĕ. Çав çулах амăшĕ суккăр пулса ларнă. Коротков çемйишĕн йăвăр, хĕн пурнăç пуçланать.

1919—20 çулсенче Коротков йулташ пуçламĕш шкулта вĕренет, анчах пурнăç чухăн пирки вăл вĕренсе тухаймасть. 1921 çулăн вĕçĕнче вăл Хĕрлĕ çарта Благое хулинче пурăнакан аслă пиччĕшĕ Андрей патне тухса кайать. Çамрăк ача Сергей 127-мĕш бригадăн, 381-мĕш стрелковăй полкăн 3-мĕш батальйона добровольцă пулса кĕрет.

1922 çулта Коротков йулташ Кольцовкăна таврăнать те амăшĕн хуçалăхĕнче тата вăхăт-вăхăтпа чукунçулĕ çинче ĕçлет.

1926 çулта Коротков йулташ Мускавпа Хусан чукун çулĕн 18-мĕш участкин 5-мĕш околодкинче, Вăрнар станцинче рабочи пулса ĕçлет. 1925 çулта ăна Кольцовкă йалсовечĕн секретарне, унтан çав çулах йалсовет председателне суйласа лартаççĕ.

Ку ĕçре вăл—кулаксене хирĕç кĕрешме, партипе правителствăн директивĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме—чухăнсемпе вăтам хресченсене пĕрлештерет. 1929 çулта Кольцовкă йалсовечĕ государствăна тырă тăратас плана районĕпе пуринчен малтан тултарать.

1929 çулта Кольцовкă йалсоветне кĕрекен икĕ йалта (Кольцовкăпа Зеленовкăра) колхозсем организациленеççĕ. Кунта вăл талкăшпе колхоз тунă никĕс çинче кулаксем клас пулса тăнине пĕтерессишĕн активлăн кĕрешет.

Кольцовкăра Сталин йачĕпе тăракан колхоз организациленсен малтанхи кунсенчех Коротков йулташа колхоз правленин председателне суйлаççĕ.

Хĕрлĕ çартан таврăнсан ăна каллех колхоз председателне суйлаççĕ.

Коротков йулташ йертсе пынипе Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз çултан çул ÿссе çирĕпленсе пырать. 1933 çулта ПСК(б)П Крайкомĕн решенийĕ тăрăх Сталин йачĕпе тăракан колхоза Пĕтĕм Сойузри Хĕрлĕ хăма çине, 1934 çулта Горьки крайĕн хисеплĕ Хĕрлĕ хăми çине çыраççĕ.

Коротковпа вăл йертсе пыракан колхозăн мухтавлă йачĕ Вăрнар районĕн тата республикăн тулашĕнче те сарăлчĕ. 1934 çулта Коротков йулташа колхозник-ударниксен 2-мĕш сйесне делегата суйлаççĕ. Кунта ăна президиум членĕ тăваççĕ те вăл сйесăн малтанхи ларăвĕнчех председател пулать.

1935 çулта вăйлă тырпул-тăвас ĕçре пит пысăк çитĕнÿсем тунăшăн ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвком президиумĕ Коротков Сергей Ксенофонтович йулташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Палавĕн орденĕпе наградăланă. Çав çулах вăрман касассипе тÿрттарас тĕлĕшпе ударлă ĕçленĕшĕн вăрман ĕçлекенсен Сойузĕн Тĕп комитечĕ Коротков йулташа хăйне йатлă сехетпе премиленĕ, колхозра каласакан кино лартса панă.

Коротков йулташ ку таранччен тунă çитĕнÿсемпе лăпланмасть, вăл пĕр чарăнмасăр малала пырать. 1936 çулта типĕ çанталăк тăнипе тырă начар пулнă çул пулин те, колхоз кашни гектартан вăтамран 100 пăт пухса кашни ĕçкунне 6-шар килограм тĕштырă валеçнĕ. Çав çулах колхоз 400 ача вальли вăтам шкул туса лартнă.

1937 çулта Коротков йертсе пыракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 30 центнер тĕш тырă, сĕлĕ—38,2 центнер илчĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 14-шер килограм тивет. Колхозниксен семйисем 400 пăтран пуçласа 1000 пăт таран тырă илеççĕ.

Иулашки икĕ çул хушшинче колхозниксем 50 ытла çĕнĕ пÿрт туса лартрĕç.

1933 çултанпа колхозра ĕнесĕр хуçалăх çук. Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана колхоз çулран çул ытлашшипех тултарса пырать.

Колхозăн пит аван клуб пур. Колхозăн хăйĕн електростанци, радиоузел пур.

Кашни колхозник килне радио кĕртнĕ. Кăçал колхоз çĕнĕ пульница туса пĕтерет.

Колхозăн хăйĕн типографи, хăйĕн хаçачĕ пур.

1925 çултанпа Коротков Сергей Ксенофонтович йалсовет членĕ. 1931 çултанпа Вăрнар Райĕçтăвкомĕпе Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ членĕ, 1935 çултанпа ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариат Совечĕн членĕ. 1936 çулта Пĕтĕм Сойузри советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш сйесĕн делегачĕ.

1937 çулхи октаберĕн 31-мĕшĕнче Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн VIII-мĕш сессийĕ Коротков йулташа Чăваш Тĕпĕçтăвком председателĕн заместителне тата Чăваш Тĕпĕçтăвком президиумĕн членне суйларĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Йевдокийа Петровна Цыганова

Канаш Суйлав Округĕ № 365

Й. П. Цыганова биографийĕ

Куславкка комбинатĕнче ĕçлекен рабочисем, работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служăшчисем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Совет депутачĕ пулма комбинатри чи лайăх работницăсенчен пĕрне, стахановкăна, Чăваш АСС Республикин Тĕпĕçтăвком членне — Цыганова Йевдокийа Петровна йулташа кандидата палăртрĕç.

Й. П. Цыганова йулташ Куславкка районĕнчи Тĕрлемес йалĕнче, чухăн чăваш хресчен семйинче, 1909 çулта çуралнă.

Октйабĕрти Аслă револуци пуличчен Йевдокийа Петровна ашшĕ çĕре сухапуçпе чавалаçа хăйĕн семйине валли çителĕклĕ тырпул туса илессишĕн кăна ĕмĕтленнĕ. Кашни утăмрах чухăнлăх хăйне пса йатернĕ. Йевдокийа Петровнăн йалти тăватă çул вĕренмелли шкулта аран-аран виçĕ çул вĕренме май килнĕ. Малала вĕренесси çинчен шухăшламалли те пулман. Выçă вилесрен тăраиса пурăнма çăкăр йлмелĕх ĕçлемеле пулнă.

Капиталисем пусмăрне йшсе антарнă Аслă Октйабĕр кăна рабочисемпе хресченсене çĕнĕ, телейлĕ пурнăç тума çул уçса пачĕ.

Октйабĕр револуци хыççăн кăна Йевдокийа Петровнăн чăн-чăн пурнăçĕ пуçланать.

Тĕрлемес йалĕнчи чухăн чăваш хресченĕн хĕрĕ — Йевдокийа Петровна Цыганова хал орденлă Чăваш республикинчи хисеплĕ çынсен шутĕнче тăрать.

Йевдокийа Петровнăн пурнăçĕ Куславкка комбиначĕн историйĕпе питĕ таччăн çыхăнса тăрать. Çак комбинатра вăл воспитани тата пурнăç путевкине илнĕ. Комбинатра ĕçлеме пуçланă малтанхи кунсенчен пуçлансах Йевдокийа Петровна заводри чи лайăх ударницă пулнине кăтартрĕ.

Комбинатри парти тата профсойуз организацисем пулăшнипе Цыганова йулташ çĕнĕ професси — рамшчик квалификацине илет. Анчах ку ăна лăплантараймаст. Вара вăл çине тăрсах производствăн технологи процесне вĕренме тытăнать, 1935 çулта разделăчнăй цехри сменă мастерĕ пулса тăрать.

Производствăра лайăх ĕçлени тата комбинатăн общественнăлă пурнăçне активлăн хутшăнни Йевдокийа Петровнăн авторитетне хăпартаççĕ. Куславкка комбиначĕнчи рабочисем, служăшчисем, инженерсемпе техниксем ăна йуратма пуçлаççĕ.

1934 çулта Куславкка районĕнчи Советсен сйесĕ ăна Чăваш АСС Республикинчи Советсен сйесне делегата суйласа йарать, ăна вара Чăваш АСС Республикĕнчи Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членне тата Пĕтĕм Сойузри тата Горкий крайĕнчи сйессене делегата суйласа йараççĕ. Çак вăхăтранпах Й. П. Цыганова йулташ Куславкка райĕçтăвкомĕн тата поçолкă Совечĕн членĕнче тăрать.

Производствăра, хăйĕн цехĕнче Цыганова йулташ социалисăмла ăмăртăва организацилекенĕ пулса тăрать. Хăйĕн примерĕпе вăл ĕç тухăçлăхне мĕнле хăпартмалли образецсене кăтартса пырать. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх стахановла йухăмăн хумĕ сарăлса кайма пуçласан, Цыганова йулташ заводра стахановла ĕç мелĕсене чи малтан пуçарса йарать.

Йевдокийа Петровна поçолкă совечĕн, завод комитечĕн тата райĕçтăвкомăн ĕçне йаланах активлăн хутшăнма вăхă тупнă-тупать те. Вăл хăйĕн сменинчи рабочисем хушшинче те пысăк ĕç туса пырать.

1934 çулта Й. П. Цыганова йулташ заводра сочувствуйушчисен группине кĕнĕ. 1936 çулта вара ăна парти организаци Пĕтĕм Сойузлă Коммунисла (болшевиксен) Парти членĕн кандидатне илнĕ.

Цыганова Йевдокийа Петровна сменă мастерĕ пулса ĕçлекен производствăри çĕнĕ çĕнтерÿсемпе паллă турĕ. Хал разделăчнăй цех пĕтĕмĕшпех стахановла цех пулса тăрать.

Куславккари комбинат воспитани парса çитĕнтернĕ чи лайăх стахановецсенчен пĕрин, Чăваш АСС Республикин Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членĕн кĕске биографийĕ çакăн пек йнтĕ.

Цыганова Йевдокийа Петровна пирĕн социалисăмла тăван çĕршывăн шанчăклă хĕрĕ. Ленин—Сталин партин ĕçĕсемпе интересĕсене пĕтĕм чĕререн парăннă работницă.

* о *

Халăх шанчăкне тивĕçлĕ пулатăп

Епĕ чухăн хресчен, чăваш семйинче çуралса ÿснĕ. Епĕ, аттеаннесемпе пĕрле, çирĕм çул кайарахри нушалă, тĕттĕм, выçă, нимĕнле правасăр пурнăçа, кулаксен пусмăрне тÿссе курнă. Ленин тата Сталин çул кăтартса, вĕрентсе пынипе çирĕм çул кайала пулнă Октйабĕрти Социалисăмла Аслă револуци ĕççыннисене буржуазипе помешчиксен пусмăрĕнчен, нушаран, выçлăхран хăтарчĕ. Ĕççыннисем ирĕке тухрĕç. Пĕтĕм влаç советсен аллине куçрĕ. Рабочисемпе ĕçхресченĕсем çĕршывăн хуçисем пулса тăчĕç. Унтанпа ĕнтĕ çирĕм çул иртрĕ. Пирĕн çĕршывра социалисăм ĕмĕрлĕхе çĕнтерсе илчĕ. Епĕр чи телейлĕ те савăнăçлă, чи ирĕклĕ те пуйан çĕршывра пурăнатпăр.

Пирĕн тăван çĕршыв ÿссе, çирĕпленсе пырать. Çĕршывпа пĕрле епĕр те ÿсетпĕр. Манăн анне, 12 ача амăшĕ, (вĕсенчен 7 пурнаççĕ) хăйĕн хĕрĕ сменă мастерĕ пулассине ĕлĕк ĕмĕтленме те пултарайман. Епĕ сменă мастерĕ пулни хал ĕнтĕ ĕмĕт мар, вăл факт. Ман пеккисем пирĕн çĕршывра пит нумай. Акă, икĕ çул кайарах В. Краснова йулташ станок çинче ĕçлеме мар, ĕçукçине илнĕ чух алă пусма та пĕлмесчĕ, çынна алă пустаратчĕ. Халĕ ăна хут те мĕнле станок çинче ĕçлеме ларт, вăл савăнта ĕçлет. Вулама-çырма пĕлет, хăйĕн тантăшĕсене ĕçлеме вĕрентме пултарать. Вăл паллă стахановкă, общественнăлă ĕçе активлăн хутшăнать, сочувствуйушчине кĕчĕ. Акă тата, Спиридонов Кирилла илер. Вăл нумай çул хушши кĕтÿ кĕтсе пурăннă. Ăна епĕ хамăрăн сменăна ĕçлеме илтĕм. Малтанах упаковкă ĕçĕнче ĕçлерĕ. Халĕ вăл хăйĕн ĕçĕпе цехри çамрăксене тĕлĕнтерет, стахановла ĕçлет. Кунне 8—9 тенкĕ ĕçлесе илет. Профсойуз членне кĕчĕ, хаçат-журналсем вулать.

Йе тата Атмолкина йулташăн пурнăçне илер. Вăл тăватă пĕчĕк ачапа тăлăха йулнă. Завком тата дирекци унне ăн пулăшасси çинчен ыйту лартрăмăр. Лайăх хватер тата укç парса пулăшрăмăр. Икĕ ачин шкула, тепĕр ачине йаслĕн вырнаçтартăмăр, хăйне производствăна ĕçлеме илтĕмĕр. Халĕ производствăра лайăх ĕçлет, хут пĕлменнисене вĕрентекен шкулра вĕренет. Тулăх тата савăнăçлă пурнăçпа пурăнать.

Епĕр килхуçи хĕрарăмсене те производствă ĕçне хутшăнтаратпăр. Сăмахран, Головина тата Рузанова йулташсем иртнĕ вăхăтра текех килте ларатчĕç, производствăпа общественнăлă ĕçсене хутшăнмасчĕç. Вĕсем халĕ активланчĕç, вĕсем пулас стахановкăсем.

Пирĕн тăван çĕршыв ССР Сойузĕн Аслă Советне Сталинла Конституци тăрăх суйлама хатĕрленет. ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем Аслă Совета депутата суйлама кандидата социалисăмшăн пĕтĕм вăйхăватпа кĕрешекен борецсене Ленин—Сталин партине чĕререн парăнса ĕçлекен партири тата партире тăман болшевиксене палăртрĕç. Ĕççыннисем вĕсене Аслă Совета суйлаççĕ. Канаш суйлав округĕнчи ĕççыннисем Сойуз Советне суйлама манăн кандидатурăна палăртрĕç. Çапла суйлавçăсем ман çине пысăк шанчăк хучĕç тата пысăк хисеп турĕç. Çак пысăкран та пысăк хисепе, халăх шанчăкне тивĕçлĕ пулма малашне те стахановла ĕçлесе пыма, болшевикла кĕрешсе пыма пулатăп Ленин—Сталин партишĕн, тăван çĕршывăн хăвачĕпе мухтавĕшĕн, ĕççыннисен телейлĕ, савăнăçлă, пуйан тата културăлă пурнăçĕшĕн кĕрешме хамăн пĕтĕм вăйа, пĕтĕм пултарулăха пĕтĕм пĕлÿлĕхе паратăп. Хамăн ĕçсене чĕререн парăнса, тÿррĕн туса пыма ĕççыннисене шантаратăп.

Стахановкă, сменă мастерĕ

Й. П. Цыганова

Манăн ачасене Сталин пăхса ÿстерчĕ

Епĕр ĕлĕк халхи пек тулăх пурнăçпа пурăнман. Епĕ хам 13 çултах тăлăха тăрса йулнă. Тертлĕ пурнăçăн тĕтрийĕ кăчча тухсан та ман умран сирĕлмерĕ.

Малтанхи ачасем пурте хĕрсем пулчĕç. Унчухне хĕрарăмсене çĕр паман. Çавăнпа епĕр çĕрсĕр аптăраттăмăр. Мĕн пурри те пĕр йат çĕрĕ çеç пулнă. Упăшка семйене мĕнле те пулин тăрантса усрас тесе, ăçта кирлĕ, унта кĕрĕшсе ĕçлетчĕ. Куланай укçине вăхăтра тÿлеменшĕн темиçе хут та акнă çĕре торги туса сутрĕç.

Империалисăм вăрçи пуçлансан, упăшкана вăрçа илсе карĕç. Епĕ 9 ачапа тăрса йултăм. Пурнăç пушшех начарланса çитрĕ. Упăшка вăрçăран килсен, лайăх пурнăç шыраса, Çĕпĕре кайрăмăр. Унта нумай пурăнаймарăмăр. Манăн упăшка, вăрçăра тата тĕрлĕ йăвăр ĕçсенче хăйĕн сывлăхне çухатнăскер, вилсе карĕ. Çĕнçĕрте те савăнса пурănасси пулмарĕ. Çуралнă çĕршыва — Тĕрлемес йалне кайала таврăнтăмăр.

Епĕр çĕнçĕртен килнĕ çĕре Куславккара пысăк комбинат туса лартнă. Манăн ачасем 3-шĕ çав комбинатра ĕçлесе çын пулчĕç.

Манăн ывăлсем халĕ çĕршыв чиккисене сыхласа тăраççĕ. Епĕ вĕсене пĕр куççулсĕр ăсатрăм. Питĕ лайăх пĕлетĕп епĕ: Хĕрлĕ çара çĕршывăн чи шанчăклă ачисене çеç илеççĕ. Манăн ывăлсем çак пысăк тивĕçе йурăхлă пулнишĕн пĕтĕм чĕререн хĕпĕртетĕп.

Тата та ытларах Алтукшăн хĕпĕртетĕп. Ĕлĕк хĕрарăмсене нимĕнле права та, ĕçлесе пурăнма çĕр те паман. Çын вырăнне шутламан. Халĕ манăн хĕре, хут сахал пĕлекенскере, вĕрентсе комбинатри мастер пулса ĕçлеме лартрĕç. Поçолкă совечĕн членне, райĕçтăвком членне, Чăваш правителствин членне суйланă. Халĕ тата Совет Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă.

Ку манăн хĕрĕн тивĕçĕ çеç мар, вăл — çĕршыври пĕтĕм хĕрарăмсен тивĕçĕ. Пирĕн çĕршывра хĕрарăмсем пур правапа та усă кураççĕ. Ку чухне пурăннă çемĕн пурăнас килет. Епĕ, 63 çула çитсе, халхи пек нихăçан та савăнса курман. Хватерте радио кĕрлесе ларать. Ĕçме-çиме çителĕклĕ. Тăхăнмалисем пур.

Алтук шăлнĕсем патне çыру çырнă чухне йаланах çапла каласа çыртаратăп:

— Есĕр унта, ачасем, çĕршыва лайăххах сыхлăр. Пĕр тупнă телейе çухатас марччĕ, тетĕп.

Епĕ çакă пурнăçшăн пуринчен ытла Сталина тав тăватăп. Вăл манăн ачасене пăхса ÿстерчĕ.

Цыганова,

Перасковийа Николайевна.

Мана Алтук пулăшрĕ

Алтука 1928 çултанпа пĕлетĕп. Пирвайхи хут ăна Кузнецк округĕнче, вăрманта тĕл пултăм. Вăрман ĕçĕнче ĕçлеттĕмĕр. Ун чухнех Алтукран тĕлĕнетĕмĕр епĕр. Питĕ маттур, хастарчĕ вăл. Çав йăвăр вăрман ĕçĕнче те арçынсенчен йулмасчĕ. 1931 çулта Кемĕр рудникне куçрăмăр, Алтук техничкăра ĕçлетчĕ.

1932 çул, феврал уйăхĕнче, епĕ киле таврăнтăм. Тепĕр виçĕ уйăхран каллех Алтукпа комбинатра тĕл пултăм. Епĕ те комбината ĕçлеме кĕтĕм. Тĕлĕнмеле унтан, хăйĕн кулленхи ĕçĕнче ÿнĕ çемĕн ÿсет, вăл пурне те хăвалаcа çитет, иртсе те кайать. Чухăн хресчен хĕрĕ, техничкă пулнăскер — халĕ сменă мастерĕ. Татах малала ÿсет, кунĕн çерĕн вĕренет, вулать, çырать шутлать. Епĕр, ун пек тантăш хĕрачасем, унăн пултарулă ĕçне пăхса савăнатпăр.

1935 çул. Епĕ чернорабочи ĕçĕнче ĕçлетĕп. Пĕр кунне мана Алтук сменине ĕçлеме куçма хушрĕç. Килĕшрĕм. Вăл мана тÿрех станок çинче ĕçлеме лартрĕ.

Епĕ хамăн ĕмĕрте ун пек машинсем курман, ĕçлеме мар, вĕсен аероплан пек уланă сассине илтсенех, пĕтĕм ăш, алă ура чĕтресе кайатчĕ, çапах та Алтук ĕçлĕнине курсан мĕн пулса мĕн килет, ĕçлетĕп терĕм те станока ĕçе йатăм. Пĕр кун ĕçлетĕп — нимĕн те пулмасть, тепĕр кун ĕçлетĕп — станок мана пăхăнмасть. Темĕн пек тăрăшатăп, çапах та станок мана парăнмасть, мана итлемест. Йăлтах аптăраса çитрĕм. Цехран тухса тарма шутларăм.

Епĕ хускалнине Алтук туйса илчĕ. Вăл пулăшма пуçларĕ. Манăн ĕçри кăлтăксене, станокăн епĕ туйса илмен секречĕсене кăтартрĕ, вĕрентрĕ.

— Варук, санăн техникă кружокĕнче вĕренес пулать, унсăрăн темĕн чухлĕ тăрмашсан та сана станок пăхăнмасть, — тетчĕ вăл кашни кунах. Чăн та кружока çÿреме пуçларăм. Вĕренекенсем калнине ăнланаттăм, пурнăçа кертме тăрăшаттăм. Анчах мĕн вĕрентнине часах манаттăм. Хут вĕренмен, çавăнпа çырса пыман.

Цехра кашни çулах хут пĕлменсене тата сахал пĕлекенсене шута илетчĕç. Епĕ йаланах тăватă çул вĕреннĕ тесе суйса пурăнтăм. Вĕренÿрен хăтарчĕç. Хут пĕлменнисене вĕрентекен шкула çÿреме вăтанаттăм. Çав вăхăтрах хамăн станок çинчен тĕплĕн вĕренес туртăм пысăк пулнă. 1936 çулта епĕ тăватă çул вĕреннĕ тесе суйса пурăнни çиеле тухрĕ. Алтук пĕлчĕ. Вăл çапла пулчĕ. Çав çул Алтук техникăла кружок организацилерĕ. Кружокра вĕренекенсене задачăсем шутлама, çырма, вулама, хушачĕç. Епĕ никăшне те тума пĕлмен. Астăватăп, тăван аппа пек вăрçрĕ вăл, нумайччен вĕренÿ çинчен ăнлантарчĕ, хута пĕлменсене вĕрентекен шкулта вĕренме хушрĕ. Итлерĕм. Шкула çÿреме пуçларăм. Мĕнле вĕреннине Алтук кашни кунах тĕрĕслеме пуçларĕ. Киле пырса задачăсем шутлама, вулама, çырма вĕрентрĕ. Халĕ вулама, çырма вĕренсе çитрĕм. Хаçат çырăнса илетĕп. ПСК(б) Партин уставĕпе программине вуласа тухрăм, ăнланман вырăнсене Алтук ăнлантарса пачĕ. Сочувствуйушчине кĕтĕм. Мана нумайччен парăнман станокăн техникине алла çавăрса илтĕм. Хамăн кулленхи производствăлă плана 120—150 процент тултаратăп. Епĕ те халĕ мухтавлă стахановкăсен ĕретĕнче. Ĕçре, вĕренÿре, пур йенпе те Алтука хăвалаcа çитесшĕн епĕ. Çитетĕпех.

Алтук пирĕншĕн питĕ сывăх. Вăл цеха пырать — ĕç хĕрнĕ çемĕн хĕрет, хастарлăхпа хаваслăх ÿсет. Кашни рабочи хăйĕн ĕçне Алтук ырласса кĕтет. Вăл хытă, тÿрĕ кăмăллă. Ĕçе пур йенчен те пăхса хаклать. Алтук, ĕçĕн пысăк тухăçлăхĕшĕн тата пахалăхĕшĕн кĕрешес ĕçре пире пример кăтартать. Вăл халăх пурлăхне сыхласшăн пĕтĕм вăйпа кĕрешет. Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн парăнса кулленхи ĕçре пурнăçласа пырать. Производствăри тăшманла çынсене хирĕç болшевикла кĕрешет. Епĕ Алтука шанатăп, çавăнпа та уншăн сасăлатăп.

Стахановка В. Краснова.

* о *

Вăл Аслă Совета суйланма тивĕçлĕ

Цыганова йулташ Куславккари комбината 1932 çулта килсе кĕчĕ. Вăл, мĕн пĕчĕкренпех тертлĕ, нушалă пурнăçпа пурăннă чăваш хĕрĕ, комбината килсен тин унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ, вăл ĕçе пысăк хĕрÿлĕхпе пуçăнчĕ. Производствăри ĕç мелĕсене часах ăнланса илчĕ. Ÿсĕм хыççăн ÿсĕм тума пуçларĕ. Ăна вара часах квалификацисĕр работницăран квалификацилĕ работницăна — рамшчицăна куçарчĕç.

Çапла вăл кĕске вăхăтрах мухтава тухрĕ. Ăна пурте йуратаççĕ, хисеплеççĕ. Вăл — комбинатри чи лайăх работницăсенчен пĕри. Малтан ударница, стахановла йухăм пуçлансан, комбинатри пĕрремĕш стахановкă пулса тăчĕ. Хай мĕнле ĕçлени çинчен ытти рабочисемпе работницăсене каласа парса, вĕрентсе, комбинатра стахановла йухăма анлăн сарма пулăшрĕ.

Унăн паттăрлăхне, активлăхне шута илсе, комбинат дирекцийĕ ăна хăма çуракан цехри сменă мастерĕ туса хучĕ. Йевдокийа Петровна ку ĕçре те хăйĕн пултарулăхне лайăх кăтартрĕ. Вăл йертсе пыракан сменă комбинатри чи лайăх, примерлă сменă пулса тăрать. Лайăх ĕçленĕшĕн Цыганова йулташа темиçе хут та премиленĕ.

Вăл производствăра çеç мар, общественнăлă ĕçсенче те маттур. Комбината килсенех вăл политикăна начар пĕлетчĕ. Йулашки çулсенче палламала мар усăлса карĕ. 1934 çулта сочувствуйушчисен ретне кĕчĕ. Хăйĕн пĕлĕвне ÿстерессишĕн нумай ĕçлерĕ. 1936 çулта ПСК(б)П кандидатне кĕме тивĕçлĕ пулчĕ. Рабочисем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Цыганова йулташ — правителствă членĕ, райĕçтăвком президиумĕн членĕ, Куславкка поçолки совечĕн членĕ. Ăна пирĕн коммунисла парти пăхса ÿстерчĕ. Вăл пирĕн çĕршывăн аслă органне суйланма та тивĕçлĕ.

Цех началникĕ В. Королов.

ЙУРАТНĂ КАНДИДАТ

— Епĕр хамăр йуратнă стахановкăна Йевдокийа Петровна Цыганова йулташа ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Совет депутачĕ пулма кандидата палăртрăмăр. Суйлавра уншăн сасăлатпăр, тесе хатĕрленсе тăраççĕ Куславкка комбинатĕнче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служăшчисем.

Мĕншĕн пит йуратаççĕ-ха Йевдокийа Петровнăна? Мĕншĕн тесен вăл çак комбинатра ÿссе йатлă çын пулнă. Вăл халĕ хăма çуракан цехра сменă мастерĕ пулса ĕçлет. Ĕлĕк пулсан, хĕрарăм кун пек ĕçре ĕçлесси çинчен шухăшлама та май пулман. Унччен кĕнчелерен ытла нимĕн те курманскер, халĕ пысăк та вăйлă машинă хăйĕн çирĕп аллисемпе çавăрса тытса кирлĕ пек ĕçлеттерет. Иртнĕ вăхăтра ĕçхĕрарăм аллине çакăн пек хаклă машина парас та çук. Ун чухне ĕçхĕрарăмне çын вырăнне те шутламан. Ăна выляс вырăнне сутнă, илнĕ. Хĕрарăма государствă ĕçĕнче ĕçлеме мар, ача-пăча çуратма, кăмака умĕнче апат-çимĕç хатĕрлеме çеç çуралнă çын вырăнне шутланă. „Чăх — кайăк мар, хĕрарăм — çын мар", тесе кулнă хĕрарăмран. Капиталисăмла çĕршывсенче ĕçхĕрарăмĕсем халĕ те çапла, тĕрлĕ пусмăрсене тÿссе пурăнаççĕ. Суйлав правипе усă курма пултараймаççĕ. Совет Сойузĕнче çеç, Октйабĕр револуци тивлечĕне, Аслă çулпуçсем — Ленинпа Сталин йулташсем йертсе пынипе ĕçхĕрарăмĕ те арçынпа пĕртан правалă пулса тăчĕ. Рабочисемпе хресченсем пĕрлешсе çĕнĕ те телейлĕ пурнăç тума аслă çул уçăлчĕ.

— Епĕ кунта, мĕн комбинат ĕçле пуçламăранпа ĕçлетĕп. Вăл вăхăтра йалсенче халхи пек колхозсем çукчĕ. Чухăн пурăнаттăмăр епĕр. Çавăнпа мĕнте пулин ĕçлесе хырăм тăрантарас тесе, Куславкка комбинатне ĕçлеме килсе кĕтĕм. — тесе пуçларĕ Йевдокийа Петровна хăйĕн сăмахне.

Вăл ун чухне урине çăпата сырнă. Çине тăларан çĕленĕ сăкман тăхăннă.

— Комбинат карти ăшне кĕрсенех, машинасем кĕрленине илтсеп, халиччен машинсем умĕнче пулса курманскер, хăраса ÿкрĕм. Калле йала çаврăнса кайас тесе те шутларăм. Çук, унта таврăнсан та, пурăнма йăвăр. Атте çук, вилнĕ. Вăтă аннене никам та мар, манăнах ĕçлесе тăрантарас пулать. Шухăшласа тăтăм-тăтăм та, хăйуланса: „Пĕрре килнĕ-тĕк, мĕн пулсан та пулать — ĕçлемеле, — татса каларăм. Директор патне кĕтĕм. „Мана ĕçлеме илетри?" — тесе ыйтрăм директăртан.

Вăл ман çине урлă та тăрăххăн та пăхса çаврăнчĕ те:

— Мĕн ĕçлеме пултаратăн есĕ? — тесе ыйтрĕ.

Ку ыйтăва хирĕç Йевдокийа Петровна труках ответ тупса парайман. Пуçĕ тавра шухăшласа илнĕ хыççăн тин:

— Мĕн хушатăр, çавна ĕçлеме пултаратăп, — тенĕ. Анчах вăл кунта киличчен хресчен ĕçĕсĕр пуçне урăх ĕç пĕлмен. Хутла сахал пĕлнĕ.

Директăр тепĕр хут Йевдокийа Петровна çине пăхса илнĕ те:

— Йурĕ. Ĕçе илĕпĕр сана. Малтанлăха „хура ĕçре" ĕçлĕн.

Кайран унта курăпăр. Ĕç укçи уйăхне 60 тенкĕ пулĕ. Килĕшетĕн-и? — тенĕ.

Йевдокийа Петровна хăйне ĕçе илнĕшĕн çав тери савăннă, хăйне йышăнакан çынна хирĕç сăмах тупса калаймасăр тăнă: „Хĕрарăм вĕт епĕ. „Хура ĕçрен" пуçне урăх мĕнле ĕç ĕçлеме пултарăп. Вĕренмен çын", — тесе шухăшланă хăйĕн ăшĕнче.

— Ну, мĕн, чĕнмесĕр тăратăн. Хăйулăрах пул. Есĕ вĕт кунта заводра, йалта мар, — тенĕ директăр.

— Килĕшетĕп. Тавтапуç сана, пиччĕ, — тавтунă вăл.

Йевдокийа Петровнăна ĕçе йышăнакан çын Дунайев хуçаматлăскер пулнă. Вăл çапла каланă:

— Ан хăра. Вĕренĕн. Малтанах йăвăр пулĕ. Ху та сисмĕн, хăнăхса кайăн. Хăллĕхе хура ĕç, унтан пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн машинă патне куçăн. Анчах, асту, хăпа мĕн вĕрентсе калаççĕ, итле. Тăрăшса ĕçле. Тăрăшсан — вĕренетĕн. Машин çине ĕçлеме куçсан ĕç укçи те ытларах илĕн.

Йевдокийа Петровна ку сăмахсемшĕн Дунайева йуратнă, хăйĕн тăван пиччĕшĕ вырăнне шутланă.

Пирвайхи кунсенче машин сассисем Йевдокийа Петровна хăлхисене хупланă. Каçхине хватере таврăнсан та, хăлхинчен шăв-шав тухман.

— Манран ĕçлесси пулмасть. Пăрахатăп та, калле йала кайатăп, — тенĕ вăл ĕçрен таврăнсан.

— Ан калаç-ха, Алтати. Уссăр ан çунтар ăшна. Ак, пĕрер ерне ĕçлесен, хута сисмĕн — вĕренсе кайăн. Епĕр те вĕт сан пекех йалтан килнĕ. Пирĕншĕн те малтанах хăнăхаччен çăмăлах пулман. Халĕ ĕнтĕ вĕренсе çитнĕ те, комбинатран ниçта та кайас килмест, — тесе йăпатнă ăна йулташĕсем.

Йевдокийа Петровна йулташĕсем сăмахĕсене ĕненнĕ: „Ĕçлес-ха. Епĕ те вĕсем пекех пулăп" тесе шухăшланă.

Кунсем, ернесем, уйăхсем иртнĕ. Йевдокийа ĕçленĕ, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хăнăхса пынă, йалти пурнăçран уйăрăлса, чăн-чăн работницă пурнăçĕпе пурăнма пуçланă. Ĕçе вырнаçса çитсен йалти ватă амăшне те хăй патне илсе пынă.

Ударлă ĕçленипе, иккĕмĕш уйăхран унăн ĕç укçине ÿстернĕ. Вăл пушшех хаваслăн ĕçле пуçланă.

— Каларăмăр сана, хăнăхса çитсен сан пек лайăх ĕçлекен те пулас çук, тесе. Чăн пулчĕ вĕт, — тенĕ йулташĕсем.

— Спасибă сире. Есĕр пулăшнипе ецĕ тытăнса йултăм. Сирĕн сăмахăра итлемен пулсан, епĕ йала та пăрахса кайаттăм-и тен. Халĕ ĕнтĕ комбинатран ниçта та кайас килмест. Çакăнта çуралса ÿснĕ пек туйăнать — савăнăçлăн каласнă вăл.

Вăхăт малала шунă. Кăнтăрла Йевдокийа Петровна ĕçленĕ. Каçхине техникăна вĕрентекен шкула вĕренме çÿренĕ. Икĕ уйăх хушшинче хăма çуракан рамă çинче ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Унтан ăна рамă çине ĕçлеме тăратнă. Пирвайхи уйăхрах вăл хăйĕн ĕç нормине 200 процент тултарнă. Çавăншăн ăна пирвайхи хут премипа панă. Ударница йатне илнĕ.

Çакна кура ытти рамшчиксем те унтан йуласшăн мар пулса ăмăртса ĕçле пуçланă. Кайарахпа вара пĕтĕм хăма çуракан цех стахановла цех пулса тăнă.

Йевдокийа Петровна рамшчицă пулса икĕ çул ĕçленĕ. Унтан ăна сменă мастерĕ туса хунă. Халĕ вăл хăма çуракан цехра сменă мастерĕ пулса ĕçлет. Ăна пĕтĕм комбинат йуратать. Çавăнпа та вĕт ăна ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Совет депутачĕ пулма кандидата палăртнă. Пурте Йевдокийа Петровна Цыганова йулташшăн сасă пама хатĕр. Вăл вĕсен йуратнă кандидачĕ.

М. Н. Данилов-Чалдун.

Национальнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Петр Дмитрийевич Краснов

Çĕрпӳ суйлав округĕ № 498

Çĕрпӳ районĕнчи „Çĕнĕ вăй" колхоз колхозникĕсемпе колхозницăсем пурте пĕр сын пек пулса Краснов, Петр Дмитрийевича,—Чăваш республикин государства план Комиссийĕн председательне, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн пĕррĕмĕш заместительне, 1928 çултанпа Коммунисла парти членне,—Националънăçсен Совечĕн депутатне суйлама палăртрĕç.

Коммунисла партин шанчăклă ывăлĕ, Краснов Петр Дмитрийевич 1903 çулта, Чăваш республикинче Куславкка районĕнчи Йершер йалĕнче, чухăн хресчен çемийинче çуралнă. Чăваш сынни. Пурнăç чухăн пирки Петр Дмитрийевич Краснов ашшĕ, Совет влаçĕ пуличченех, айакра тĕрлĕ ĕçсенче тара кĕрĕшсе,—кулаксем патĕнче работникре те, Атăл çинче матрос пулса та,—ĕçлесе çӳренĕ. Çапла тертленсе ĕçлесе çӳресе çеç хăйĕн хуçалăхне пĕтĕмпех йухăнса кайасран тыткаласа тăма пултарнă. Халĕ унăн ашшĕ колхозра тӳрĕ ĕçленипе çĕнĕ, пуйан та савăнăçлă пурнăçшăн кĕрешет.

Вунă çула çитсен Петр Дмитрийевич Краснов йалти шкула вĕренме кĕрет те 1917 çулта вĕренсе тухат. 1921 çулта Хусанти Политехникăлă Институт çумĕнчи рабфака вĕренме кĕрет. Кунтах, 1923 çулта Çамрăксен Коммунисла Союзне кĕрет.

1924 çулта рабфакран вĕренсе тухса Мускаври Плеханов йачĕпе тăракан Халăх хуçалăхĕн институтне вĕренме кĕрет. Ку институтран 1928 ç. вĕренсе тухат. Вĕренсе тухнă хыççăн икĕ çул хушши,—1928 çултанпа 1930 çула çиттиччен,—ССР Союзĕн Тĕп Статистик Управленинче: пирвайхи вăхăтра статистик пулса, кайрантарахпа —инструктор-статистик, йулашкинчен—ăслăлăхлă сотрудник пулса ĕçлет.

1930 çулта, институтран вĕренсе тухни синчен диплом илнĕ хыççăн, Петр Дмитрийевич Краснов Чăваш республикинчи Статистикă Управленине ĕçлеме килет, унта 1932 çулччен Статуправлени начальникĕн заместительĕ,1932 çултан пуçласа 1937 çулхи август уйăхĕччен унăн начальникĕ пулса ĕçлет. Халăх хуçалăхĕн учот управленинче (УНХУ) Петр Дмитрийевич хăй лайăх специалис, пултарулă организатор, сисĕмлĕ руководитель, Ленин—Сталин парти ĕçне пĕтĕм чĕререн тăвакан большевик пулнине кăтартрĕ. Петр Дмитрийевич Красновăн çакнашкал пахалăх пуррине кура, 1937 çулхи август уйăхĕнче ăна Чăваш АСС Республикинчи Госплан председательне, 1937 çулхи октăбĕр уйăхĕнче Госплан председателĕн ĕçĕсене туса пынипе пĕрлех Чăваш АСС Республикинчи Халăх Комиссарĕсен Совет председателĕн пĕррĕмĕш заместительĕ туса хучĕç.

Петр Дмитрийевич Краснов 1934 çултанпа Чăваш АСС Республикин Ĕçтăвакан Тĕп комитет членĕнче тата 1934 çултанпах ПСК(б)П Чăваш Обком пленум членĕн кандидатĕнче тăрат.

Петр Дмитрийевич Краснов хăй пирĕн парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса кĕрешнипе унăн аслă çулйĕрне пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пынипе партин тата халăхăн пур тĕрлĕ тăшманĕсене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешсе пынипе пирĕн республикăри ĕç сыннисем тата парти организацийĕ шанса панă сав терипысăк ĕçсене туса пыма пултарнине кăтартрĕ.

3-мĕш суйлав участки

Çĕмĕрле (Чăваш Коммунĕ" корр.). Виççĕмĕш номĕрлĕ суйлав участки „Большевик" завод клубĕнче ĕçлет. Участкăри суйлав комиссийĕн председателĕ пулса заводри стахановец, коммунист Константин Пархисенко йулташ ĕçлет.

Халĕхи вăхăтра суйлав участкинче хĕрӳлĕ ĕç пырат. Пӳлĕмсем тума фанерă хăмисем, материалсем хатĕрлеççĕ. Суйлав çуртне илемлетеççĕ. Хĕрлĕ кĕтес, буфет валли пӳлĕмсем, декаберĕн 12-мĕшĕнче суйлавçăсем пырсан, вĕсене ларма сĕтел-пукансем хатĕрленĕ. Хĕрлĕ кĕтесре 20 шер комплект шашкăпа шахмăт, домине пулат, 10 тĕслĕ хаçат-журналсем, тĕрлĕрен кĕнекесем, брошурăсем те пулмала. Çавăнтах „Большевик" заводăн çак çулсенчи ĕç тĕслĕхсене кăгартакан диаграммăсем пулаççĕ, стена хаçачĕ кăлараççĕ.

Ку участкăра 1467 суйлавçă шутланат. Суйлав комиссийĕ членĕсем пурте çак суйлавçăсем хушшинче ĕçлеççĕ.

3-мĕш номĕрлĕ суйлав участки ытти суйлав участкисенчен, культурлăх, йĕркелĕх йенчен малта тăрат. Пӳлĕмре икĕ сĕтел. Вĕсене хĕрлĕ хăмачăпа витнĕ. Пĕр сĕтелĕ çинче суйлав çинчен калакан кĕнекесем, хаçат-журналсем. Унтах шурă хут, чернильница, карандаш. Суйлавçăсем, хăйсен йачĕсене, йе çуралнисене тĕрĕс мар, йанăш çырнине тупсан, çавăнтах вĕсене йусама зайавлени çырса параççĕ.

Стенасене илемлетнĕ. Суйлав системи, совет çĕршывĕн çитĕнĕвĕсем çинчен кăтартакан плакатсем çакăнса тăраççĕ. Кунтах ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн политбюро членĕсен сăнĕсем. Занавескăсем карнă. Каçхине пӳлĕме икĕ електричествă лампи çутатса тăрат. Патефон пур. Пӳлĕмрен тухсан фоере радио калаçат. Кунта ир пуçласа каçченех сынсем пулаççĕ. Ватамăн шутласан кашни кун çак суйлав комиссийĕ ĕçлесе ларакан пӳлĕме 150 çын ытла пырат. Нойаберĕн 15 мĕшĕнче кун каç йенеле сулăнсан 5 сехет хушшинче 63 çын пычĕç. Пархисенко йулташ вĕсемпе калаçу туса иртерчĕ. Суйлавçăсем ССР Союзĕн Аслă Совет депутатне суйлама регистрациленĕ йулташсем çинчен ыйтса пĕлчĕç. Пархисенко йулташ Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Аслă совета депутата суйлама палăртнă кандидатсем И. Новиковпа (ПСК(б) Парти райкомĕн секретарĕ) А Краснов (Йетĕрне районĕнчи „Крестьянская газета" колхоз председателĕ, орденоносец) йулташсем баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Хăшĕсем тата Испанипе Китайри суйлав системи çинчен ыйтса пĕлеççĕ. Суйлав комиссийĕ членĕсем ку ыйтусем тăрăх суйлавçăсене тĕрĕс ответ параççĕ.

Хар. Лисин.

Агитаци пуçланманпа пĕрех

ВĂРНАР. Суйлав участкисенчи комиссисем нойаберĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа хăйсене уйăрса панă çуртсене йĕркене кĕртсе ĕçлеме тытăнчĕç.

Кăкшăмри суйлав комиссийĕ ĕçлекен пӳлĕме тĕрлĕрен плакатсем, лозунгсем çапса илемлетнĕ. Унтах Сталинла Конституципе „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" тата суйлавçăсен спискине курăнмаларах вырăна çакнă. Ĕççынисем палăртнă кандидатурăсен ĕçĕсем çинчен. вĕсем мĕнле майпа государства умĕнче пысăк хисеп илни çинчен ĕççыннисене паллаштарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. РСФСР-чи Горький суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшнĕ Совет Союзĕн Геройĕ В. П. Чкалов çинчен, Вăрнар округĕнчен Национальнăçсен Советне сасăлаттарма килĕшнĕ Совет Союзĕн Геройĕ П. И. Пумпур çинчен, тата Çĕмĕрле округĕнчен Союз Советне суйлама баллотировкăна тăма килĕшнĕ Новиков йулташ çинчен кашни суйлавçа ăнлантарса парассишĕн тăрăшаççĕ. Кружоксенче агитаторсем хĕрсех ĕçлеççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕсем патне килĕсене кайса ăнлантараççĕ, хутла пĕлменнисене суйлавччен вулама-çырма вĕрентессишĕн тăрăшаççĕ.

Вăрнарти 1-мĕш №-лĕ участкăра суйлав комиссийĕ халĕ те ĕçе тытăнман-ха. Участкăра 649 суйлавçă. Участкăн центрĕ—фосфорит завочĕ. Пайанхи куна çитсе те суйлавçăсем пирĕн округра кам баллотировкăна тăма килĕшни çинчен пĕлмеççĕ. Заводра ĕçлекенсем хушшинче агитаципе пропагандă ĕçне пачах пăрахăçа кăларнă. Килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче нимĕнле ĕç те çук. Фосфорит заводчĕн клубĕнче суйлав комиссийĕ ĕçлет, анчах унта суйлавçăсен спискине çапнисĕр пуçне урах нимĕн те курăнмаст.

Суйлавçăсен спискине пăсса пĕтернĕ, хушаматне улăштарнă, хăшĕн кил адрĕсне йанăш çырнă. Шадрина Йекатерина вырăнне, Шадрина Ирина, тесе çырнă. Скворцова адрĕсне 7-мĕш №-лĕ çурт, тесе çырас вырăнне, 4-мĕш №-лĕ çурт тесе çырнă. Заводра ĕçлесе пурăнакан Виктор Филиппова список çине пачах кĕртмесĕр хăварнă.

Участкăри суйлав комиссийĕ председателĕ Хламин ĕçе тытăнман. Секретарĕ А. Михайлов хăйсен ăçта, мĕн ĕçлемели çинчен те пĕлмест. Комиссийĕ членĕ Иван Лебедев комиссийĕ председателĕ камне те, Вăрнар округĕнче баллотировкăна тăма кам килĕшнине те пĕлмест. Суйлав комиссийĕ суйлавçăсем хушшинче нимĕн те тумаст.

Ст. Улангай.

„Хĕрлĕ фронтовик" колхоз çуракине хатĕрленет

ЙĔПРЕÇ „Хĕрлĕ фронтовик" колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илнипе чарăнса тăмаст. Çитес çулта татах вăйлă тырпул туса илес тесе çуракине хатĕрленме халех тытăнчĕ. Халĕхи вăхăтра вăрлăхсене суртласа тасатас, минералă удобренисем хатĕрлес ĕçсене организациленĕ. Вăрлăхлăх уйăрса хунă 76 центнер пăрçана пĕтĕмпех суртласа пĕтернĕ.

Минералă удобренисене хатĕрлес ĕç хĕрӳлĕн пырат. Çак тарана çитсе 170 центнер фосфорит, 40 центнер аммиак çĕлитри, 28 центнер суперфосфат хатĕрленĕ. Планпа пăхнинчен 113 центнер фосфорит, тата тĕрлĕ миниралла удобренисем кӳрсе килмеле.

Вырăнти удобренисене сарлакан пухма тытăнчĕç. Уйа 460 лав тислĕк кăларнă, 10 центнер кĕл хатĕрленĕ. Уйа тислĕк кăларассипе кашни кун 10—15 лаша ĕçлет. 3—6 бригадăсем (бригадирсем Гордейевпа Сергейев) уйрăмăнах малта пыраççĕ. Сергейев бригади йал сывăхĕнчи сырмаран 3—4 çул çĕрсе выртнă тислĕке 100 лав уйа кăларчĕ.

Кусемсĕр пуçне уйра фекали шĕвекĕ тытма пĕр траншейă тунă. Вăл траншейа 100 тоннă фекали кĕрет. Çак траншейпа йунашар фекали шĕветмели тепĕр шăтăк тунă. Вылăх-чĕрлĕх тислĕк шĕвекне тытса йулма лаша вити сывăхне пĕр шăтăк туса хатĕрленĕ. Вăл шăтăк тарăнăшĕ 1,25 метр, урлăшĕ 1,25, тăршшĕ 2 метр пулат.

Йалхуçалăх машинĕсене пурне те пĕр çĕре пухса, тасатса сарайне кĕртсе лартнă. Машинăсене йусама тытăннă.

Çавăнпа пĕрлех çитменлĕхсене те кăгартса хăварма тивет. Пĕррĕмĕш бригадăн бригадирĕ Кузьма Петров ĕçкĕ хыççăн йарăннипе çитес çулти вăйлă тырпул кĕрешĕвĕ çинчен манса кайнă.

Петров бригади пур ĕçпе те йулса пырат. Ĕçкунĕсене халь те çырса пĕтермен. Машинăсене сарай умне тухса лартнă та, çаплах ишĕлсе выртаççĕ. Петров бригадир ĕçе йапăхтарса йани çинчен стена хаçачĕпе районри „Колхоз пурнăçĕ" хаçат çине те çырнă. Анчах Петровшăн хаçат çине çырни нимех те мар пулмала. Колхоз правленийĕ (председател Шемйакин) Петров бригади çине тивĕçлипе çаврăнса пăхни кирлĕ.

Д. Михайлов.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

81-мĕш километрти трубана хăвăртрах туса çитермеле

Нойаберĕн 20-мĕшĕнче 565 метр тăршшĕ лини хывнă. Çапла нойаберĕн 21 мĕшĕ тĕлне хывнă лини тăршшĕ 17,4 километр шутланат. Халĕ лини хывакан бригадăсем 81-мĕш километрти труба патне сывхарса пыраççĕ. Анчах Шăхасан, Шăмăршă тата Шăнкăртам районĕсем ĕçпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ организацилемен пирки труба çине тăпра тултарасси малтанхи пекех йерипен пырат. Ку тарана çитсе те 1300 кубла метр çеç тултарнă, тата 3,5 пин кубла метр ытла тултармала.

81-мĕш километртан иртсен те 58-мĕш километрти труба çине тăпра тултарасси йерипен пырат. 54-ш километрти икĕ трубана тунă. Аслă Çавалпа Ункă шывĕсем урлă кĕперсем хывнă çĕрте те вĕçлесе çитĕрмен ĕçсем пур.

Линине пĕр чарăнусăр хывса пыма çав ĕçсене çак кунсенчех туса çитерни кирлĕ. Ку ĕнтĕ строителствă руководителĕсенчен тимлĕн, çине тăрса ĕçлеме ыйтат. Районри организацисен ку ĕçсене пурнăçа кĕртме ĕç вăйĕ йышлăн организацилемеле.

Нойаберĕн 21-мĕшĕ тĕлне çĕрĕçне тăвас плана 90,4 процент, пĕтĕм строителствă планне 58,8 процент тултарнă.

Ĕç улшăнчĕ

Атнар-йалĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р-нĕ) участкăра суйлав саккунне вĕренесси лайăхланчĕ: кашни 10 киле пĕр агитатор уйăрса панă. Вĕсем йалта пулнă историлĕ документсемпе тата ыт. те усă кураççĕ. Вулав çуртĕнче „справочный стол" ĕçлет. Уйта занятисенче ăнланман йе агитаторсем ăнлантарса парайман ыйтусене ăнлантарса параççĕ. Вулав çуртĕнче кашни каçах суйлав саккунĕ çинчен калаçусем пулса иртеççĕ. Унтах Сталин йулташ Советсен VIII мĕш сйесĕнче тунă докладă тата Сталин йулташăн патефон пластинкисем çинĕ çырнă докладне итлеççĕ.

П. Сатур.

Шкулти политинформаци

Йетĕрнери профессийе техника шкулĕнче вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах пур классенче те политинформаци туса иртереççĕ.

Вĕренекенсем политикăла ыйтусемпе хытă интересленеççĕ, вĕсене вăхăтра йĕлсе пыраççĕ.

Г. Федоров.

Кĕлет тулли тырпул

Вырăскас Пикшихри „Мотор" колхоз членĕ Кусма мучи, ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кун тĕлне шăпах 60 çул тултарат. Кусма мучин иртнĕ кун-çулĕ питĕ хура-шурлă. Вăл ун çинчен хăй те аванах калаçа парат.

— Ĕлĕкхи пурнăç çинчен мĕн каламали пур ĕнтĕ. Вырлăх, нуша, хĕн-хур çеç кӳрсе тăна мана ун чухнехи пурнăç. Хам акса тунă тырă хам çемйене çиме хире-хирĕç çитсе пынине нихăçан та астумастăп епĕ. Ăçтан çиттĕр-ха тырă? Пĕр йатпа пӳрт тулли семйе тăрантарса пурăннă епĕ. Вылăх-чĕрлĕх çинчен шухăшламали те пулман. Пĕри ĕçлекенни, тепри çийекенни—çаплаччĕ ун чухнехи пурнăç,—тет вăл.

Кусма мучи халь хăй пит ĕçлесех кайаймаст, колхозра çăмăлрах ĕçсем çеç ĕçлет, кил хушшинче вылăх-чĕрлĕх пăхат. Вылăх-чĕрлĕхĕ Кусма мучин пăхмалăх пур вара: 14 сурăх, ĕне, сысна, чăххисем килкарти тулли кĕшĕлтетсе çӳреççĕ.

Семйере Кусма мучисĕр пуçне ĕçлекенсем виççĕн. Кăçал вĕсем колхозра 895 ĕçкунĕ туса 400 пăт ытла тĕш тырă илеççĕ. Кĕлет тулли тырпул пулат.

Çĕнĕ суйлав çинчен тапратсан Кусма мучи хĕрсе кайсах калаçат вара.

— ССР Союзĕн Аслă Советне лайăхрах сынсене, телейлĕ пурнăç туса паракансене суйлатпăр. Халь ки телейлĕ пурнăçшăн епĕ Сталин йулташа чĕреренех тав тăватăп, тет вăл.

А. Соловйов.

Национальнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Алексей Михайлович Розанов

Йетĕрне суйлав округĕ № 506

Йетĕрне хулинчи çу çапакан тата спирт завочĕсенче, Засурскри ăратлă лаша вылăх ĕрчетекен заводра ĕçлекен рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пĕрлешӳлĕ пухăвĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Сурăм колхозĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Национальнăçсен Совет депутатне Йетĕрне суйлав округĕнчен Чăваш АСС Республикĕнчи Шалти ĕçсен халăх комиссарне—Розанов, Алексей Михайлович йулташа палăртрĕç.

Алексей Михайлович Розанов Горький хулинче, рабочи-платник семйинче çуралнă. Çак ĕçре унăн ашшĕ 50 çул ĕçлет. Алексей Михайловичăн ача чухнехи пурнăçĕ савăнăçлă иртмен. Пысăк çемйе, ашшĕн пĕчĕк ĕçукçийĕ, семйери йаланхи нуша,—Розанов йулташ çитĕннĕ тата вĕреннĕ условисем çакăн пек бнтĕ.

Семйере чухăн, çитмен пурнăç пирки Розанов йулташăн кашни çулах, çулла парахутсем çинче масленщик йе кочегар пулса ĕçлеме тивет. Хĕллехи вăхăтсенче вăл малала вĕренет, вара хăйĕн пултарулăхне, вĕренме тăрăшнине кура, хăйĕн ĕмĕчĕ вĕсне çитме çине тăрсах харсăрланнине кура, Розанов йулташăн, йулашкинчен, 1918 çулта Кулибинскри ремесленнăй училищинăна пĕтерсе, уйрăм квалификаци илме май килет. Вăл парахутсем çинче машинист помошникĕ пулса ĕçлеме тытăнат.

1918 çулта А. М. Розанов большевиксен партин сочувствуйушчисен ĕретне кĕрет, 1919 çулхи феврал уйăхĕнче парти членне кусат.

1918 çул. Партипе Совет правителствин социалисăмла çамрăк çĕршыва шалти тата тулти тăшмансенчен сыхлама рабочи класпа ĕçхресченĕсен пĕтĕм вăйне мобилизацилеççĕ. Парти чĕннипе Розанов йулташ 1918 çулта, хĕлле Октăберти Социалисăмла Аслă революци çĕнтерсе илнисене сыхлама Кăнтăрти фронта кайат. Интервентсемпе çапăçнă чухне фронтра аманнă пирки Розанов йулташа Горький хулине таврăнма тивет. Кăштах сывалсанах, вăл 1919 çулхи июль уйăхĕнче каллех хĕвелтухăçĕнчи фронта Колчака хирĕç çапăçма кайат.

Граждăн вăрçи вăхăтĕнче Розанов йулташ рабочи клас диктатури çĕршывне çирĕплетессишĕн чĕререн тăрăшса та та активлă кĕрешекен боец пулнине кăтартнă. Вăл хĕвелтухăçри фронтăн 8 мĕш военно-полевой строителствăри Гидротехникă пайĕнче çар комиссарĕ пулса ĕçлет. Унтан ăна Туркестан фронтне куçараççĕ те унта вăл Хĕрлĕ çарăн пумай чаçĕсенче çар комиссарĕ пулса ĕçлет.

Халăхсен телейĕшĕн, лайăх пурнăçшăн, пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтермелле тăвассишĕн кĕрешекен Хĕрлĕ çарăн тĕрлĕ чаçĕсене вăл иксĕлми хастарлăхпа тата революцилĕ хаваслăхпа йертсе пырат.

Граждăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн Разанов йулташ социалисăм строителствинче активлăн хутшăнса ĕçлет. 1926—27 çулсенче вăл суд органĕсенче — малтан Горькири кĕпĕрне судĕнче следовател пулса, унтан Шарйа хулинче ĕçлет. Кунта вăл ПСК(б)П Райком бюровĕн членĕ пулса, общиствăла-политикăла пурнăçа та активлăн хутшăнат.

1927 çултан пуçласа—вунă çул хушши Розанов йулташ ОГПУ тата Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн органĕсенче ĕçлесе халăх тăшманĕсене хирĕç питĕ хайаррăн кĕрешсе пырат. Социалисăмлă государствăн тăшманĕсене хирĕç активлăн, хăйне шеллемесĕр кĕрешнĕшĕн Розанов йулташа темиçе хутчен те наградăсем панă.

Розанов А. М. йулташ, партин тĕп çул-йĕрне пĕр иккеленмесĕр пурнăçа кĕртсе пыракансенчен пĕри, Ф. Дзержински воспитани панă чекистсен мухтава тивĕç йалисене сыхласа усрат, троцкиссемпе, бухаринцăсемпе, шпионсемпе, диверсантсемпе, Йапонипе Германи фашисăмĕн агенчĕсемпе хайаррăн кĕрешсе пырат.

Халĕхи вăхăтра Розанов А. М. йулташ Чăваш АСС Республикинчи Шалти ĕçсен халăх комиссарĕ пулса, троцкисла-бухаринла ирсĕрсен çав тери ăста пытанса хăйсен пӳтсĕр контрреволюцилĕ ĕçĕсене туса пынăскерсене буржуалă-националиссен пур йулашкисене те, тăрă шыв çине кăларса тăпăлтарас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр кĕрешет.

Колхозра пуйан та культурлă пурнăç

ИШЛЕЙ. Кăçал районри нумай колхозем калама çук пысăк тупăшлă тырпул туса илчĕç. Акă, Шетмĕпуç йалсоветĕнчи Свердлов йачĕпе тăракан колхозăн вăтам шутпа гектартан ыраш 23 центнер тухнă. М. Красновпа А. Спиридонов опытниксем хăйсен участкисем çинче гектартан тулă 21 центнер, йасмăк 29 центнер, викă 28 центнер туса илнĕ. Çакăн чухлĕ пысăк тухăçлă тырпул туса илесси вăл çĕрпе лайăх усă курма пĕлнинчен килнĕ. Свердлов йачĕпе тăракан колхозра тырăсене йаровизацилесе акнă, минералă удобренисемпе усă курнă тата çумкурăкĕсемпе вăхăтра кĕрешнĕ.

Колхозра ĕçкунĕ çине 12 килограм тĕштырă валеçĕнет. Çакăн чухлĕ тырăна колхозниксем нисăта чикме аптраççĕ. И. Николайев колхозник, алă çулхиекер, пĕччен ĕçлесе 300 пăт тĕш тырă илет.

Çакнашкалах „Ырашпулăх" колхозра М. Максимов семйи 418 пăт, Иванов семйи 345 пăт, Н. Волков семйи 330 пăт тырă илеççĕ. Колхоз пулаччен Ырашпулăх хресченĕсем çакăн чухлĕ тырпул туса илесси çинчен тĕлĕкре те шутламан, шутлама та пултарайман. Совет влаçĕччен йалта 24 хура пӳрт пулнă пулсан, пайанхи куна пĕр хура пӳрт те йулман. Вĕсен вырăнне кашнийех çĕнĕ шурă пӳрт лартнă. Йал çулсерен пуйса культурланса пырат. Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕн Федосейевăн ĕлĕкхи вăхăтра пĕр çул та çимели çитмен. Колхоза кĕрсен тин Федосейев тулăх пурнăçпа пурăнма пуçларĕ. Вăл 4 çул хушши пĕр улшăнмасăр конюхра ĕçлет. Кăçал Федосейев семйи 695 ĕçкунĕ тунă. Çак ĕçкунĕ çине вĕсем колхозран 434 пăт тырă илеççĕ.

Кун пек тĕслĕхсене районра тата [illegible] ршер кăтартма пулат. Тӳрĕ ĕçлекен колхозниксен пурнăçĕ кунран кун пуйанланса тата культурланса пырат.

В. Сергейев.

Округри суйлав умĕнхи канашлусемпе митингсенче

ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулни

Çĕршывра пур çĕрте те округри суйлав умĕнхи канашлусем, митингсем тата пухусем пулса иртеççĕ. Унта округри суйлав комиççисем регистрациленĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулаççĕ.

Тутар республикинче Тутар, Мари тата Мордва республикĕсенчи ĕççыннисем РСФСР-чеп Хусан суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат—Совет Сойузĕн Геройĕ О. Йу. Шмидт йулташ пынă.

Тутар республикин столицинче—Хусанта Свобода плошчĕнче хулă ĕççыннисен 80 пин çынлă митингĕ пулнă. Суйлавçăсем хăйсен кандидатне—Арктикăна çĕнтерсе илекене хĕрўлĕ кĕтсе илнĕ.

О. Йу. Шмидт йулташ Хусанта нумай суйлав участкине пынă, Орджоникидзе йачĕпе, Ленин йачĕпе тăракан заводсен рабочийĕсен нумай çынлă митингĕсенче сăмах тухса каланă. Отто Йулйевич çавнашкалах, Владимир Илйич Ленин вĕреннĕ университета пынă. Шмидт йулташ кунта студентсемпе, профессăрсемпе тата ăслăлăх работникĕсемпе ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласси çинчен калаçу туса иртернĕ.

Нойаберĕн 18-мĕшĕнче О. Йу. Шмидт йулташ Бугульма хулине кайнă. Кунта 10 пин çынлă митинг пулнă.

Сталинора (Донбасс) 27 № суйлав участкинчи ĕççыннисен нумай халăхлă митингĕ пулса иртнĕ. Ку митингра ĕççыннисем хăйсен Сталински хула суйлав округĕнчен тăратнă Сойуз Советне депутата суйламали кандидатпа—Украйинă Коммуниссен (большевикла) Партин Донецк Обкомĕн секретарĕ Едуард Карлович Прамнек йулташпа тĕл пулнă.

Суйлавçăсем хăйсен кандидатне ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Прамнек йулташ пухура пысăк сăмах каланă.

Нойаберĕн 19-мĕшĕнче Вологдăра хулан пĕрремĕш суйлав участкинчи суйлавçăсен пухувĕ пулнă. Пухура Çурçĕр суйлав округĕнчен йĕтĕнстрой рабочисем тăратнă Национальнăçсен Советне депутата суйламали кандидат—Архангельскри промышленнăç Академи студенчĕ, Василий Степанович Мусинский орденоносец сăмах тухса каланă.

Мусинский йулташ хăй пурнăçĕ çинчен, хăй ĕлĕк йалти качча пулнăскер, халĕ малта пыракан тÿрĕ рабочи стахановец пулни çинчен каласа панă. Халăх ăна пысăк тимлĕхпе итленĕ. Мусинский йулташ çавнашкалах тата хăй халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташпа, Совет Правительстви пуçлăхĕ Молотов йулташпа тĕл пулни, ăна пысăк наградăпа—Ленин орденĕпе наградăлани çинчен каласа панă.

— Епĕ сире,—тенĕ йулашкинчен Мусинский йулташ,—мана шаннăшăн тата чыс тунăшăн тав тăватăп. Депутатăн пысăк йатне тивĕçлипе тытса тăрăп, суйлавçăсемпе тачă çыхăну тытма пулатăп. Сталин йулташ стахановла йухăма мĕн пур майсемпе сарса пырасси çинчен панă кăтартăва пурнăçа тÿрĕ кĕртетĕп. Епĕ пĕтĕм фашисла таса марлăхпа пĕр хĕрхенÿсĕр кĕрешетĕп. Хамăн пĕтĕм вăйа Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, ĕççыннисен телейлĕ те хаваслă пурнăçĕшĕн паратăп.

Пуху пĕр сасăпах суйлав кунĕнче хăйсен сассисене Çурçĕр ĕççыннисен тивĕçлĕ кандидачĕшĕн Мусинский йулташшăн пама решени йышăннă.

Ростовра (Йарославль облăçĕнче) нойаберĕн 20-мĕшĕнче виçĕпинçынлă митингра ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидат—орденоносец И. Д. Климов капитан сăмах тухса каланă.

—ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама манăн кандидатурăна тăратнă Ростов суйлав округĕнчи суйлавçăсем шаннине тивĕçлĕ пулас тесе,—тенĕ Климов йулташ хăйĕн сăмахĕнче,—епĕ мана хушнă ĕçсене чыслăн пурнăçа кĕртетĕп.

Ĕççыннисем шанма пултараççĕ, пĕр тăшман та пирĕн çĕршыв çине наказани илмесĕр килсе тĕкĕнме хăйаймасть. Совет летчикĕсем йенчен вăл кирлĕ пулсан, пирĕн çине тапăнма хăйнă тăшмана ним йулми çапса салатма, хăйсен вăйлă машинĕсене пур вăхăтра та сывлăша илсе хăпарма хатĕр.

(ТАСС).

Доверенннăйсем ĕçре

Калинински хула суйлав округĕнчи йĕнĕн ты лакан пунктсене, колхозсен бригадисене, хĕрлĕ кĕтессене кашни кулленех доверенннăйсем пыраççĕ. Вĕсем ăнлантарса чĕлхепе, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали, округри суйлав комиççийĕ регистрациленĕ кандидатсем çинчен суйлавçăсене каласа параççĕ. Доверенннăйсем: Веселов йулташ Калинински МТС че, Иванов йулташ Лебедевски йалсоветра çавăн пек калаçусем темиçе хут та ирттернĕ ĕнтĕ.

Калининска районĕнчи суйлав участкисенче ĕçлеме доверенннăйсене 47 çын уйăрнă. Вĕсене пулăшма ПСК(б)П райкомĕ тата 74 агитатор—йалти партире тăракан тата партире тăман большевиксене уйăрса панă.

Доверенннăйсем колхозниксен пухувĕсене иртерсе, округри суйлав умĕнхи канашлу йышăннă решенисем çинчен тĕплĕн каласа параççĕ.

ПСК(б)П Калинински йал райкомĕ хаљ доверенннăйсене валљи консультаци пункчĕ организацилет.

(ТАСС).

Осинск суйлав округĕнче

Свердлов облăçĕнчи Осинск суйлав округĕнче Сойуз Советне суйлама хатĕрленесси анлăн саралнă. Округра 234 суйлав участки тунă. Кашни участкăна 700—900 суйлавçă кĕрет.

Осинск суйлав округĕнчи районсенче участкăри суйлав комиççи членĕсем валљи пилĕккунлă семинарсем организациленĕ. Вăл семинарсенче 800 çын вĕренет. Семинарсенче вĕренекенсем Сталинла Конституцине, çĕнĕ суйлав саккунне, Сталин йулташ Пĕтĕм Сойузри Советсен VIII Чрезвычайлă сйесĕнче тата ПСК(б)Парти Тĕп Комитечĕн февральри мартри пленумĕнче тунă докладсене вĕренеççĕ. Семинарсенче суйлав участкинчи ĕçсен меслечĕсемпе практикисене тĕплĕ сÿтсе йаваççĕ.

Участкăсенче суйлавçăсен спискисене тĕрĕслессипе ĕçлеме 500 ытла çынна йавăçтарнă.

Спискăсенче çитменлĕхсене тупса палăртсан, вĕсене çавăнтах тÿрлетеççĕ.

Районри парти тата совет организацисем суйлав участкисем валљи çуртсем хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Пулас суйлавсем валљи культурлă, аван вырăнсем пулса тăракан 180 çурта пĕтĕмĕшпех йусанă.

(ТАСС).

Воронеж облаçĕнчи колхозниксен пысăк тупăшĕсем

ВОРОНЕЖ, нойаберĕн 18-мĕш (ТАСС). Березовски районĕнчи „Красная звезда" ертелĕнче пĕтĕм тырă склачĕсенех тырăпа тултарса лартнă. Колхозниксем кашни ĕçкунĕ пуçне çуршер пăт тырă аванс илсе хăйсен амбарĕсемпе пÿлмекĕсене тырăсемпе тултарнă. Ĕçкунĕ пуçне вĕсем пĕтĕмĕшпе пĕрер пăт тырă тата нумай пахча-çимĕç илеççĕ. Верхне-Хавски районĕнчи партин 17-мĕш сйесĕ йачĕпе тăракан колхозра та ĕçкунĕ çавнашкалах пуйан.

Тырă тата выльăх апачĕ нумай пулни колхозниксене килте усракан выльăх-чĕрлĕх пуçне нумайлатма май парать. Кăçал колхозниксем 150 пин ытла пуç тĕрлĕ выльăх туйанна. Ольховатски районра ĕнесĕр колхозниксене пурне те ĕне туйантараççĕ. Ку районра 60 колхозăн пилĕкшер таварлă фермă пур. Таловски районра ĕнесĕр колхозниксем фермăсенчен 554 пăру илнĕ. Ново-Калитвенски районри колхозниксем кăçал 4 пине йахăн сысна тата сысна çури туйанна.

Çу кăлармали культурăсен пысăк тухăçĕ

Кăçалхи çул колхозсем çу кăлармали культурăсене пăлтĕрхинчен нумай пысăкрах тухăçлă туса илчĕç. Пĕтĕм çĕршывĕпе илсен кăçал хĕвелçавăрвăшĕ вăтам шутпа гектартан сакăр центнера йахăн тунă (пĕлтĕрхинчен виçĕ центнер ытларах).

Çу кăлармали ытти культурăсем те: клещевина, йĕтĕн-кудрйаш, арахис, кунжут пит лайăх пулнă.

Кĕрхи рапс текен культура—çу кăлармали чи хаклă культура. Кăçал вăл та пит лайăх пулнă. Кĕрхи рапс гектартан 10,7 центнер тухнă,—планра палăртнинчен тăватă центнер ытларах.

Колхозник-стахановецсем культурăсен тухăçĕ тĕлĕшпе çĕнĕ рекордсем тунă. Хĕвелçавăрнăшне пысăк тухăçлă туса илес кĕрешÿве Орджоникидзе йачĕпе тăракан колхозри (Близнецовски район, Харьков облăçĕ) звенйевайа Е. Голубничнайа пуçарса йанă. Кăçал вăл гектартан 36 центнер хĕвелçавăрнăшĕ туса илнĕ,—ку вăл унăн пĕлтĕрхи рекордĕнчен виçĕ центнер ытларах пулать.

(ТАСС).

И. А. Владимиров художник „Пулковски сăрчĕсенче Йуденичпа çапăçни" йатлă картинă туса пĕтернĕ.
Укерчĕк çинче: И. А. Владимировхудожник картининчен тунă репродукци.
Н. Йанов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариатĕнче тата йăвăр промышленнăçăн тĕрлĕ отрăçĕлĕсенчи профсойузсен Тĕп Комитечĕсенче

I. Социалисăмла ăмăртуван çĕнĕ çĕкленÿне организацилени

Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тата Донбассри кăмрăк промышленнăç рабочисен, Кăнтăрти хура металлурги рабочисен, центрти районсенчи хура металлургри рабочисен, хĕвелтухăçри районсенчи хура металлурги рабочисен, центрти тата Кăнтăрти йăвăр промышленнăç строителствинчи рабочисен, азот тата спец-хими промышленнăç рабочисен, електростанцисенчи рабочисен, нефт кăларакан промышленнăç рабочисен профсойузĕсен Тĕп Комитечĕсем, йăвăр промышленнăç предприйатисенчи стахановецсемпе ударниксен сĕнÿвĕсемпе килĕшсе, йăвăр промышленнăç рабочисем хушшинче халĕ çĕнĕ вăйпа сарăлса пыракан социалисăмла ăмăртува хавхалантарма тата ăмăрту вăйлăрах сарăлса кайма май тума, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ ырланипе, çапла йышăнаççĕ:

1. Ăмăртура ĕçĕн чи лайăх кăтартăвĕсене тунă тата стахановла йухăмăн çĕкленÿне панă малта пыракан заводсене, шахтăсене, цехсене, агрегатсене пама йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕпе профсойузсен Тĕп Комитечĕсен куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавĕсене тăвас.

Куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавсене çак отрăçлĕсенчи предприйатисене валљи тăваççĕ:

1.) Хура металлурги тăрăх—виçĕ йалав;

2) Кăмрăк промышленнăçĕ тăрăх—пилĕк йалав, вĕсенчен Донбасс валљи виçĕ йалав;

3) Нефт промышленнăç тăрăх—виçĕ йалав (промысласем валљи тата заводсем валљи);

4) Електростанцисем валљи икĕ йалав;

5) Азот промышленнăçĕ валљи пĕр йалав;

6) Главхимпром промышленнăçĕ валљи пĕр йалав;

7) Пăхăр промышленнăçĕ валљи пĕр йалав;

8) Тăхлан-никель промышленнăçĕ валљи пĕр йалав;

9) Ылтăн промышленнăçĕ валљи пĕр йалав;

10) Тимĕр руди промышленнăçĕ валљи пĕр йалав;

11) Огнеупорсен промышленнăçĕ валљи пĕр йалав;

12) Кокс промышленнăçĕ валљи пĕр йалав;

13) Главтрубосталь предприйатисем валљи пĕр йалав;

14) Йăвăр промышленнăç строителстви валљи пĕр йалав (центр, Кăнтăр, Урал, Çĕпĕр тата Инçет-Хĕвелтухăç).

Малашне йалавсен хисепне отрăçĕлсем хушшинче социалисăмла ăмăртăва сарса пынине кура ÿстереççĕ.

Кунсăр пуçне, предприйатисенчи цехсем тăрăх вĕсенче социалисăмла ăмăртă хавхалантарма, завод управленисемпе профсойузсен завод комитечĕсен йалавĕсене тунă.

Социалисăмла ăмăрту ĕçне хаклама тата опыта пĕр-пĕрне пама йăвăр промышленнăçри социалисăмла ăмăртусен тĕп комиççине (жÿрине) çак составпа тунă:

1. М. И. Целищчев—жÿри председателĕ.

2. А. Г. Николенко—Донбассри кăмрăк промышленнăç рабочисен профсойузĕн Тĕп Комитет председателĕ.

3. П. С. Бережной—Кăнтăрти хура металлурги рабочисен профсойузĕн Тĕп Комитет председателĕ.

4. Г. Ф. Косилов—центрти районсенчи хура металлурги рабочисен профсойузĕн Тĕп Комитет председателĕ.

5. А. Ф. Кухаркин—центртипе Кăнтăрти йăвăр промышленнăç рабочисен строителсен профсойузĕн Тĕп Комитет председателĕ.

6. А. Г. Стаханов

7. М. Д. Дÿканов

8. Йа. Б. Смољанский

9. „Правда" редакци тата „Индустрия" редакци представителĕсем.

II. Социалисăмла ăмăртура мала тухнисене валљи похвальнăй лист тата значок

Правителствă ырланипе, Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕн приказĕпе тăваççĕ:

1. „Йăвăр промышленнăçри социалисăмла ăмăрту отличникĕ"—значок. Ку значокпа ĕçтухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешÿре палăрнă чи лайăх стахановецсемпе хуçайствĕнниксене наградăлаççĕ.

2. Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕн „Похвальнăй листи". Кăна ăмăртура мала тухнă чи лайăх ударниксемпе стахановецсене наградăласа параççĕ.

Çур çул куçса çÿрекен пăр çинче

Нойаберĕн 21-мĕшĕнче пољарти куçса çÿрекен „Çурçĕр пољусĕ" станцине туни çур çул тултарчĕ. Хăйула совет пољарникĕсем—Совет Сойузĕн Геройĕ И. Д. Папанин, Е. Т. Кренкель, П. П. Ширшов тата Йе. К. Федоров орденоносецсем ăсăлăлăхпа-тĕпчевлĕ пысăк ĕç турĕç.

„Çурçĕр пољусĕ" станцийĕ çур çул хушшинче 1.000 километр ытла йухнă.

Халĕ ĕнтĕ совет ăсăлăхĕ Пољус районĕнче пăрлă витĕнÿ мĕнлине, пăр пысăкăшне тата вĕсем мĕнлине, пăр вăй-хăвачĕ мĕнлине т. ыт. те тĕплĕ пĕлет. Куçса çÿрекен станцийе уçиччен, пољус çывăхĕнчи пăр çине самољотпа, анса лармалла май пуррине никам та пĕлмен.

Пољусра хĕлкаçакансем пољарти вăтаçĕр басейнин океанографи ыйтăвĕсенчен пĕрне татса пачĕç. Вĕсем тарăнлăха виçни тата тĕпĕн рельйефне палăртни нумай кирлĕ проблемăсене татса пама май парать.

„Çурçĕр пољусĕ" станцинче хĕл каçакансем сăнани магнетисăм облăçĕнче тата пусăм вăйне виçнин, çĕр шарĕн форми мĕнле тăнине тĕплĕ пĕлсе çитес облăçра, пысăк ĕç пулса тăрать.

Куçса çÿрекен станци материалĕсем пољар тинĕсĕсенчи районра тата уйрăмăн илсен, ССРС—Çурçĕр пољусĕ—Çурçĕр Америкă сывлăш çулĕпе карапсене тата самољотсене пĕр хăрушлăхсăр çÿреме май парассинче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

(ТАСС).

ХРОНИКĂ

ССР Сойузĕн правителстви тата Итали правителстви хушшинчи нойаберĕн 20-мĕшĕнче пĕтнĕ дипломатилĕ калаçусем тăрăх Итали правителстви 1938 çулхи йанварĕн 20-мĕшĕнчен кайа мар Киеври генеральнай консульствине, Ленинградрипе Тбилисири консульствисене тата Новороссийскрипе Батумри вице-консульствисене хупать.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр йенĕнчи Фушань хулинчен (Шанхайран Çурçĕр-Хĕвеланăçнелерех) пуçласа Ханчжоу заливĕ хĕрринчи Чжапу хули (Шанхайран Кăнтăр Хĕвеланăçнелерех) таран тăракан Шанхай фрончĕн пĕтĕм 180 километрлă тăрăхĕнче хăйар çапăçусем пыраççĕ.

Йапонцăсем Шанхай—Нанкин чукунçулĕ тăрăх Нанкина хÿ ĕлекен Китай çарĕсем тавра çавранса пыраççшăн. Çапла туса вĕсем Фушанерен Чжапу таран тăракан Китай оборонин пĕтĕм линийех хăрушлăха кăларса тăратасшăн. Ку тĕллевпе йапонцăсем моторла кимĕсем тата сулăсем çинче Тайху кÿллин хĕвеланăç йенне куçарма Цзиасин-Сучжау чукунçул районĕнче нумай çар пухнă. Йапонцăсем ку ĕçе пурнăçласине чарма Китай командованийе Тайхун Хĕвеланăç йенче пысăк вăйсем пухнă.

Вăйлă çапăçусем Сучжоу хулинчен хĕвелтухăçнелерех, çавнашкалах тата Шанхай-Ханчжоу чукунçул тăрăхĕнче (Ханчжоу-Чжейзйан провинцин тĕп хули), Цзиасин станци районĕнче пыраççĕ.

Нойаберĕн пĕрремĕш çуруйăхĕнче йапонцăсем Шанхайа 60 пин ытла çĕнĕ салтак куçарнă.

Çурçĕр Китайра лару-тăру улшăнмасăрах тăрат. Китай партизанĕсем пысăк активлăхпа вăрçаççĕ. Шаньси провинцин çурçĕр пайĕнче илĕк кун хушшинче партизансем 42 йапони грузовикне тыса илнĕ. Нойаберĕн 15-мĕшĕнче партизансем Госйань йалĕ районĕнче Йапони çарĕсем çине пилĕк хут тапăнна Вăл тапăнусем вăхăтĕнче 200 йапони салтакĕ вилнĕ.

(ТАСС).

Чиркÿрен больницă тăваççĕ

ЕЛĔК. Александровски йалĕнчи колхозниксем тĕн сĕрĕмĕ саракан чиркÿ сийенне ăнланса илчĕç. Çавăнпа та колхозниксем чиркÿрен больницă тума йышăнчĕç.

Больницăна халĕх тума тытăнаççĕ.

И. Шумилов.

Йĕпреçри хăма çуракан „СПОТАРА" заводне

(Йĕпреçрен 15 километртра, „Екконом" поççолки çывăхĕнче)

Аслă бухгалтер
Аслă бухгалтер заместителĕ
Счетовод
Економист-плановик

КИРЛĔ

Еçукçи килĕшÿ тăрăх.
Çак адреспа пĕлтермеле: Шупашкар, Красноармейскайа урамĕ, №5. „СПОТАРА" Чăваш кантурне.

Испани Компартин Тĕп Комитечĕ Китайри коммуниссене саламлани

Испанири коммуниссен партин Тĕп Комитечĕ Китайри коммуниссем патне саламлă телеграммă йанă: Телеграммăра çапла каланă:

„Есĕр Йапони империалисăмне хирĕç, пусмăрлакансене хирĕç кĕрешнине, епĕр хумăрăн кĕрешÿ вырăнне хуратпăр. Есĕр халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешетĕр.

Епĕр, тапăнакансене хирĕç есĕр чаплăн кĕрешнине тата есĕр пĕрлĕхлĕ пулнине саламлатпăр. Епĕр пĕлсе тăратпăр—сирĕн хăйулăх Йапони империалисăмĕн йунлă планĕсене аркатса пăрахĕ. Токио—Рим—Берлин пусмăрлăхпа намăссăрлăх, терроризм вăрçă, ишĕлтерÿпе варварствă саракансксерсем пулса тăраççĕ,—çавсен сĕмсĕрлĕхне Китайра тата Испанире вĕсен халăхĕсен никам çĕнтереймен вăйĕпе хуçаççĕ; Китай тата Испани халăхĕсем хăйсен никамапăлăнманлăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешсе, пĕтĕм халăхсене валљи никамапăхăнманлăх, ирĕклĕх, прогресс тата мир пулмала тăваççĕ".

(ТАСС).

Испанири компартин конференцийĕ пухăнать

Барселонăран пĕлтереççĕ:

— Испанири коммуниссен партин Тĕп Комитечĕ Испанири коммуниссен партин партилĕ конференцине пухмала тунă. Тĕп Комитет пленумĕ политбÿрова конференцине хăçан пухмалине тата конференци кун йĕркине палăртса йышăнма хушнă.

(ТАСС).

Кĕтÿçсен паттăр ĕçĕ

КАЗАХСТАН. Бурневски перевал текен сăрт-ту урлă каçмалли вырăнта вăйлă çилтăман пуçланса кайнă. Çав вăхăтра унта Мирзойан хулинчен Чикмента илсе кайакан пит пысăк сурăх кĕтÿвĕ—пурĕ 60 пин сурăх пулнă. Сурăх кĕтÿне кĕтÿçсем 30 çын пăхса пынă.

Анчах вăйлă çилтăман пуçлансан кĕтÿçсенчен 27 çынĕ, сурăхсене пăрахса, сăрт хÿттине кĕрсе пытаннă. Кĕтÿçсенчен виççĕшĕ—Ахметйев, Курдалийев тата Абралийев сурăх кĕтÿне пăрахса кайман, вăйлă çил урăран ÿкернĕ пулин те, çапах вĕсем сурăхсене сăрт хÿттине хуса кÿртнех. Кĕтÿçсене пулăшма пынă рабочисемпе колхозниксем кĕтÿрен уйрăлса йулнă сурăхсене те хуса пуçтарма пулăшнă. Çапла сурăх кĕтÿне çăлса хăварнă.

Паттăр кĕтÿçсем—Ахметйев, Курдалийев тата Абралийев йулташсем халь сурăх кĕтÿне кирле çĕре илсе кайаççĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкарти ГОРТОП

1937—38 султа Шупашкар хулинчи пур учреждениссене, предприйатисене тата шкулсене вут-шанкă тăратма

ДОГОВОРСЕМ ТĂВАТ.

Договор тума учреждениссен, предприйатисен хăйсен уполномоченнăйĕсене доверенноç парса çак адреçпе йамала: М. Горький урамĕ, 23-мĕш çурт

Договор тунă организацисем çеç кирлĕ таран вут-шанкă илме пултараççĕ.

Договор тумалли срок кăçалхи декаберĕн 1-мĕшĕччен.

3—1

Чăваш республикĕнчи Госсортфонд кантурне

МАШИНИСТКА КИРЛĔ

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, Госсортфонд

2—2

Пĕтĕм Сойузри „Заготзерно" пĕрлешĕвĕн Чăваш республикĕнчи кантурне

ШУПАШКАРТА ĔÇЛЕМЕ (Калинин урамĕ, 83)

КИРЛĔ:

Аслă бухгалтер—1
Тырă типĕтме техорук—1
Ревизор-инспектор—1
Кадрсемпе ĕçлеме ответлă исполнител—1
Пушар хурал инспекторĕ—1
Картототчик—1
Статистик—1
Завхоз—1

Районсенче ĕçлеме:

Аслă бухгалтерсем, бухгалтерсем, наханăх йенĕпе ĕçлеме техоруксем, лабератори пуçлăхĕсем кирлĕ.

3—1

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 880. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.